чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

# ХЫПАР



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

186/26592/ № | Юн кун, 2014, авăн (сентябрь), 24 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru

Чăваш Енре Культура çулталăкĕ

# Юнран юна куçса пырса

## СССР халăх артисчĕ Валерий Яковлев ыран 75 çул тултарать

***Валерий Николаевич Яковлев. СССР халăх артисчĕ, РФ Патшалăх тата ЧР Премийĕсен лауреачĕ. Вăл К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрне, Раççейри наци театрĕсенчен вăйлисенчен пĕрне, 30 çул ытла ертсе пырать.***



Валерий Яковлев 1939 çулхи авăнăн 25-мĕшĕнче Шăмăршă районĕнчи Виçпӳрт Шăмăршă ялĕнче кун çути курнă. Мĕнлерех вырăн йышăнать çуралнă кĕтес унăн кунçулĕнче? Ун пирки пĕр-ик сăмахпа каласа кăтартма çук. Кунта – унăн тăванĕсем, пĕлĕшĕсем, ял-йыш. Сăнасах, пĕлсех тăрать вăл хăйĕн ывăлне. Унăн çитĕнĕвĕсем, çитменлĕхĕсем – ял-йыш умĕнчех эппин.

Валерий Николаевичшăн вара тăван ялне тухса çӳренин тепĕр енĕ те пур. Кашнинчех вăл унтан вăй илсе, чунпа пуянланса таврăнать. Унсăр хăйне шартлама сивĕре шăнса кӳтнĕ ача, хĕвел çутипе ăшшисĕр, тумлам шыв лекменрен шаннă чечек пек туять. Юн тăванлăхĕ çеç мар, урăххи те туртать пулĕ ăна Виçпӳрт Шăмăрша. Çапла çирĕплетсе калама мĕн хистет-ха? Унăн пултарулăхне тишкернĕ май пуçа килекен шухăшсем. Чăнласах халăха çывăх вăл. Ахальтен каланă сăмахсем мар кусем. Çĕр, хресчен ачи вăл. Хăйне ас тума пуçланăранпах ун терт-нушипе, хуйхи-суйхипе, савăнăçĕпе пурăннă. Çак ыратупа юрату ача каччă çулне çитсе 1956 çулта ялпа яланлăхах сыв пуллашсан та иртмен. Мускавра, тĕнчери чаплă вĕренӳ заведенийĕнчен пĕринче, ГИТИСра, пĕлӳ илнĕ чухне унăн пултарулăхĕ никĕсленсе тăракан тепĕр тымар – ăслăлăхпа вĕренӳ – «çĕр шăтарса» тухаççĕ. Тахçан малтан Виçпӳрт урамĕнчи çӳллĕ çĕмĕрт тăрринчен курăнакан 13 ял, çавăн пекех каçхи тӳпери ялтăр çăлтăрсен чаршавĕ хăйне майлă тĕнче пулнă, Мускав вара çав «ялти» тĕнчене аслăлатать.

Урам, картиш еннелле виçшер чӳрече тухакан çурт, йăрăс та тăпăлтăпăл çĕмĕрт йывăççи, кĕтӳ кĕтсе çӳренĕ улăх-çаран Мускав виçипе ытла пысăках та мар-мĕн. Кунта – урăх тĕнче. Ĕнерхи ача тӳрех лайăх алла лекнĕ. Д.Д.Данилов çыравçăвĕрентекен тăван ашшĕ вырăнĕнче пулнă. Пултарулăх енĕпе ертсе пыракан Василий Александрович Орловпа Мария Осиповна Кнебель, МХАТ артисчĕсем, мĕн панă – пăсăлма ĕлкĕреймен çамрăк çавна пĕтĕмпех ăша хывнă. Пултарулăх енĕпе Турă панă пулсан, вăл пур. Ăна пытарма çук. Талантлă пулма никам та вĕрентеймест. Ăсталăха туптама, искусство алăкне мĕнле уçмаллине, ун патне мĕнле çывхармаллине пĕлме вара педагогсем пулăшнă, çул кăтартса пынă. Яковлев хăй аса илнĕ тăрăх, тĕлĕнмелле çынсем ĕçленĕ вĕсемпе. Пĕринчен тепри хитре, çӳллĕ. Хăшĕн çаварĕнче – тӳрĕ чĕлĕм, иккĕмĕшĕн – хитре туя. Иртсе кайсан та çаврăнса пăхмасăр чăтаймастăн. Çав аура калама çук вăйлă хăват панă. Çак çынсем пек пуласчĕ тени тăрăшса вĕренме хистенĕ. Унсăр пуçне тĕрлĕ музее, куравсене, стадионсене çӳрени те ăсталăха, тавра курăма ӳстерме пулăшнах ĕнтĕ.

Валерий Яковлевпа пĕрле вĕреннĕ Нинăпа Николай Григорьевсен, Нина Яковлевăн, Анна Кутузовăн, Нинель Смородиновăн тата ыттисен шăпи ăнăçлă пулса тухни институтра мĕнле вĕрентнинчен тата артистăн хăйĕн тăрăшулăхĕнчен нумай килнĕ. Çапла 1961 çулта чăваш театрĕ çĕнĕ йышпа ӳснĕ. Тăвата ĕç – «Ялта» /Ф.Павлов/, «Ĕçлесе тупнă çăкăр» /А.Островский/, «Ромеопа Джульетта» /У.Шекспир/, «Малиновкăри туй» /Л.Юхвид/ – илсе килнĕ çамрăк артистсем.

Валерий Яковлевăн театр сцени çинчи пĕрремĕш роль – «Ялта» драмăри Ванюк сăнарĕ. Пĕрремĕш роль – пĕрремĕш ăнăçу. Унтан ыттисем: «Ромеопа Джульеттăри» Меркуцио, «Кай, кай Ивана» камитри Иван, «Юнлă туйри» Леонардо, «Тутимĕрти» Асамат, «Телейпе Илемри» Багдад Халифĕ, «Хумсем çырана çапаççĕ» драмăри III Александр, «Юратупа кавăнри» Микола, «Хӳхĕм хĕрĕн хӳхлевĕнчи» Суздальпе Владимир Княжествин аслă кнеçĕ, «Сан ятупа» трагедири Аскольд сăнарĕсем. Шăпах вĕсем тăрăх Яковлев артистăн пултарулăхпа ăсталăх шайĕ епле ӳссе пынине, унăн артист карьери ăнăçлă пулса тухнине хаклама пулать. Анчах мĕн тивĕçтерменха ăна? Мĕншĕн артистра çеç курас темен вăл хăйне? ГИТИС пĕтернĕ хыççăн тепĕр çулах асăннă институтăн режиссер факультетĕнче вĕренме пуçланă.

Яковлева Шупашкарта ĕçлеме пуçламашкăн йывăр килмен. Кунта та ун пекех «халăхран тухнисемех» ĕçленĕ.

●➡ *4 стр.*

ТЕАТР ĔÇĔ – АХАЛЬ ĔÇ ÇЕÇ МАР, ПĔТĔМ ПУРНĂÇĔ – ТЕАТР. КУНТА КУЛЛЕН 12-14 СЕХЕТ ĔÇЛЕССИ – ХĂНĂХНĂ ЙĔРКЕ. СЕХЕТ ÇИНЕ ПĂХМАСĂР ВĂЙ ХУРСАН ÇЕÇ АРТИСТА, РЕЖИССЕРА ТЕАТР ХĂЙ ЮРАТМА ПУÇЛАТЬ. МĔНРЕ ПАЛĂРАТЬ-ХА ÇАКĂ? ЕНЧЕН ТЕ ТЕАТР САНСĂР МАЛАЛЛА ПУРĂНАЙМАСТЬ, УНТА ЭСĔ ÇУККИ ÇАВ ТЕРИ ПАЛĂРАТЬ, КУРАКАНСЕМ САНШĂН ПИТĔ ТУНСĂХЛАÇÇĔ ПУЛСАН. ИКĔ ЕНЛĔ ЮРАТУ КИРЛĔ ИККЕН ТЕАТРА

## ÇЫРĂНТАРУ - 2015

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|---|
| Хыпар | ВД800 | 703,86 | 288 | 279 | 144 |
| Хыпар | В8353 | 286,08 | 150 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | ВД804 | 329,28 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | В1515 | 296,88 | 222 | 213 | 141 |
| Сывлăх | В1524 | 188,82 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт хушма хуçалăх | В4806 | 167,88 | 114 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | В4838 | 353,82 | 168 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси кил | В3887 | 167,88 | 108 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | В1529 | 279,48 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | В4608 | 163,44 | 150 | 126 | 108 |
| Лик | В3429 | 120,36 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | В4807 | 269,28 | 192 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | В4847 | 629,58 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | В4802 | 256,08 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | В3208 | 157,02 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | В3771 | 125,52 | 114 | 111 | 90 |

**АВĂН, 25 – ЮПА, 4**

**Çак тапхăрта «Хыпар» Издательство çурчĕн пур кăларăмне те Раççей почтин кашни уйрăмĕнчех йӳнĕрех хакпа çырăнтараççĕ.**

***Васкăр, укçăра перекетлĕр!***

# Сывă пулас килсен – сасăла!

***Республикăра пурăнакансен сывлăхне сыхлас тата çирĕплетес ыйтусемпе граждансене анкетăна хутшăнма йыхравлаççĕ.***

Михаил Игнатьев хăйĕн указĕпе Правительствăна "Чăваш Республикин сывлăх профильне" хатĕрлесе çирĕплетме хушнă. Çакнашкал темăпа ятарлă программа кашни муниципалитетăн пуçармаллине палăртнă.

Çавнашкал профиль çине тăянса кашни муниципалитет "Сывлăха аталантармалли план" çирĕплетме тивĕç. Унта медицина айккинчи, çын сывлăхне сиенлĕ витĕм кӳрекен факторсене чакармалли мероприятисене çирĕплетмелле.

Муниципалитет профилĕ – кашни территорире ведомствăсен хушшинчи команда пулмалли, вĕсен социаллă партнерлăхĕ çинчен калакан хатĕр. Планра асăннă территорире пурăнакансен сывлăх тăрăмне тĕплĕн те пахалăхлă çырса кăтартнипе çеç çырлахмалла мар, этеме витĕм кӳрекен, медицинăпа çыхăнман факторсене асăнмалла. Пурнăç, ĕç условийĕсенчен, апатланăвĕнчен, хăйне хупăрласа тăракан тавралăхран, канмалли тата ӳтпĕве пиçĕхтермелли майсем еплереххинчен... – çыннăн сывлăхĕ çаксенчен те килет-çке.

ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви анкета ыйтăвĕсене хуравланă май граждансем хăйсен пурнăçĕн пахалăхĕ çинчен шухăша кайнипе пĕрлех хăйсем пурăнакан вырăнти, тен, сывлăх профильне хатĕрлеме хастар хутшăнасса шанать. Чăваш Ен Пуçлăхĕн указĕ еплерех пурнăçланса пынине республикăри Министрсен Кабинечĕн председателĕ Иван Моторин ертсе пыракан Правительство комиссийĕ тĕрĕслесе тăрĕ. Пĕр-пĕр ялăн е хулан сывлăх профилĕ, урăхла калас тăк – сывлăха упрамалли никĕс – еплерех пуласси унта пурăнакансенчен хăйсенчен тӳрремĕнех килет.

■ **И.ВЛАДИМИРОВА**

**КУН** хыççăн **КУН**

☎ 56-04-26, 28-82-91

## Тĕп парнене тивĕçнĕ

***Чăваш Енри пултарулăх ушкăнĕсем Пĕтĕм Раççейри "Çĕнтерӳ салючĕсем" фестиваль гран-прине çĕнсе илнĕ.***

Федерацин Атăлçи тата Урал округĕсенчи коллективсен тупăшăвĕ Пермь хулинче иртнĕ. Унта Шупашкарти, Екатеринбургри, Челябинскри, Хусанти, Ижевскри, Самарти, Эрĕнпурти, Йошкар-Олари, Пензăри, Чĕмпĕрти тата ытти хулари пултарулăх ушкăнĕсем хутшăннă. Тĕрлĕ жанр артисчĕсем, наци театрĕсем, цирк студийĕсем – пĕтĕмпе пин ытла çын – халăх пултарулăх çурчĕн сцени çинче пултарулăхне кăтартнă.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине çĕнтерӳпе вĕçленĕренпе 70 çул çитнине халалланă фестивале РФ культура министерстви тата Раççей çар-истори обществи пулăшнипе йĕркеленĕ. Кăçалхи çу уйăхĕнчен пуçласа 2015 çулхи çу уйăхĕччен фестивалĕн регион тапхăрĕсене герой хуласенче, çар мухтавĕн тата тыл паттăрлăхĕн хулисенче ирттереççĕ. Атăлçи тата Урал округĕсен тапхăрĕ Пермь хулинче пулнă. Атăлçи округĕн гран-прине Чăваш Енри коллективсем çĕнсе илнĕ. Урал округĕн тĕп парнине Екатеринбург ăстисем тивĕçнĕ.

**И.СЕРГЕЕВА.**

## Анапăран çĕнтерӳпе таврăннă



***Вăрнар районĕнчи Кĕçĕн Кипек шкулĕнче 8-мĕш класра вĕренекен Никита Александров çар искусствисем енĕпе йĕркеленĕ Пĕтĕм Раççейри çамрăксен VII уçă вăййисенче 1-мĕш вырăн йышăннă. Ăмăртусем Анапа хулинче иртнĕ.***

Чăваш Ен чысне Никитăпа пĕрле асăннă районти Мулакасси ялĕнче çуралса ӳснĕ 16 çулти Денис Павлов та хӳтĕленĕ. Вăл Анапăра 3-мĕш вырăн йышăннă. Арçын ачасем пĕчĕкренех спортпа туслă. Дениса РФ тава тивĕçлĕ тренерĕ Леонид Павлов ăсталăха ӳстерме пулăшать. Никитăна вара ăмăртусене Геннадий Егоров хатĕрленĕ. Сăмах май, арçын ачана кикбоксинг енĕпе малтанхи утăмсем тума пуçласанах республикăри паллă тренерсем унăн малашлăхĕ ăнăçлă пулассине шаннă. Турă панă талантпа пĕрлех вăл çирĕп характерлă пулнипе те палăрать.

**А.ГРОМОВА.**

## Йывăçран – вăрман патши



***Çĕнĕ Шупашкарта бензопăчкăпа йывăçран тем те пĕр касса кăларакансен Пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш фестивалĕ иртнĕ. Мероприятие Хула кунне халалланă.***

Унта Раççейри, Беларуçри, Казахстанри, Украинăри тата Германири паллă вунă ăста пухăннă. Конкурс химиксен хулинчи историпе ӳнер музейĕ умĕнче 3 куна тăсăлнă. Çак тапхăрта конкурсантсем çĕнĕ экологи сукмакĕ валли йывăçран 30 скульптура хатĕрленĕ. Экологи сукмакĕ çитес вăхăтра "Тĕкĕрç кати" культурăпа кану паркĕнче уçăлмалла. Конкурсра пур номинацире те Украинăран килнĕ Сергей Дышлевой çĕнтернĕ. Вăл йывăçран вăрман патшине касса кăларнă. Пуртăпа çыхăнтарнă композици те питĕ хăйне евĕр пулса тухнă. Ĕç хатĕрĕ çине кайăк тата вĕллене сĕткен йăтакан пыл хурчĕ пырса ларнă... Чăваш Енри Александр Иванов икĕ хутчен те кĕмĕл призер пулнă. Мурманск облаçĕнчен килнĕ Сергей Люктюхин вара "бронзăна" икĕ хутчен тивĕçнĕ. Пĕртен пĕр хĕрарăм – Краснодар крайĕнчен килнĕ Анастасия Каминская – Шупашкар ГЭСĕ прдприятирен ятарлă парнене тивĕçнĕ.

**Р.ИВАНОВА.**

## Чăваш хĕрĕсен тӳпи те пур



***Литвари Вильнюс хулинче армспорт енĕпе тĕнче чемпионачĕ иртнĕ. Ăмăртура 18 çула çитмен çамрăксем, ветерансем, арçынсемпе хĕрарăмсем тупăшнă. Унта 46 çĕр-шывран 900 ытла спортсмен хутшăннă.***

Чемпионатра Чăваш Ен чысне И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн спорт клубĕнче ăсталăха туптакан виçĕ пике хӳтĕленĕ. Вĕсенчен иккĕшĕ "Юниорсем-21" ушкăнра мала тухнă. Турнирăн пĕрремĕш кунĕнче чылай ăмăрту çĕнтерӳçи Олеся Игнатьева сылтăм алăпа вăй виçсе кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ, иккĕмĕш кун чăваш хĕрĕ сулахай алăпа кĕрешсе "бронзăна" тивĕçнĕ. Унăн тусĕ Эльмира Алеева хăйĕн виçинче виççĕмĕш вырăн йышăннă. Пухмача наградăсемпе тепĕр икĕ ентеш, хальхи вăхăтра Мускавра пурăнакан спортсменсем, пуянлатнă. Ирина Кутузова çамрăксен ăмăртăвĕнче пьедесталăн пĕрремĕш картлашки çине хăпарнă, Кристина Тихонова виççĕмĕш кăтартупа палăрнă. Чемпионат пĕтĕмлетĕвĕпе пирĕн çĕр-шыв команди 26 "ылтăн", 34 "кĕмĕл", 33 "бронза" çĕнсе илсе пĕрремĕш вырăна çĕкленнĕ.

**Е.АНДРЕЕВ.**

### Çанталăк çинчен

Паян уяр çанталăк пулать. Çил хĕвел тухăçĕнчен 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 19, çĕрле 9 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 748 мм, сывлăшри нӳрĕк 46 процент.

**Кун тăршшĕ 12 сехет те 6 минут.**

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил хĕвел тухăçĕнчен 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 18, çĕрле 8 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 749 мм, сывлăшри нӳрĕк 50 процент.

**Кун тăршшĕ 12 сехет те 1 минут.**

ЛАРУ

# Тĕрĕслев усă кӳтĕр

## Пĕр-пĕрне ăнланса, пулăшса ĕçлесен сахалрах йăнăшăпăр, явап тыттарасси те чакĕ

***Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕç-хĕлне, Раççей Федерацийĕн Регион аталанăвĕн министерстви хăй вăхăтĕнче пĕлтернине шута илсен, 22 сăнавпа тĕрĕслев органĕ /прокуратура, МЧС, УФАС, Россельхознадзор, Ростехнадзор т.ыт.те/ 40 ытла енпе тĕрĕслени çирĕпленет. Тĕрĕслевçĕсем тепĕр чухне финанс, пурлăхпа техника тĕлĕшĕнчен пурнăçлама питех те йывăррине пĕлсе тăрсах предписани хăвараççĕ е акт çыраççĕ, муниципалитетăн е ял тăрăхĕн ахаль те чухăн бюджетне татах та çуклăха кучаракан штраф санкцийĕ йышăнаççĕ. Ку татса памалли ыйтăва тата йывăрлатать. Влаç тытăмĕнчисене сăнавпа тĕрĕслев органĕсене халĕ те малтанхи пекех канăççăрлантараççĕ-ши? Ку темăпа уйăх каялла иртнĕ лару хыççăн лару-тăру улшăнма тытăннă-ши?***

– Тĕрĕссипе, вăл лайăхланчĕ, ĕçлеме те çăмăлланчĕ. Хирĕç тăруллă самантсене уçăмлатма республикăри мобильлĕ ушкăн пысăк витĕм кӳрет. Тĕрĕслев хыççăн ăнланманни-килĕшменни тупăнсан вăл тӳрех вырăна тухса каять, документсене тишкерет, – пĕлтерчĕ республикăри Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен ĕç тăвакан канашĕн директорĕ Станислав Николаев.

Чăваш Республикин вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕç-хĕлне сăнаса тата тĕрĕслесе тăракан ведомствăсен хушшинчи комиссийĕн Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе иртнĕ ĕнерхи анлă ларăвĕнче тĕрĕслевпе сăнав мониторингĕн пĕтĕмлетĕвне, вырăнти влаç тытăмĕнчисем çĕр ыйтăвĕсемпе ĕçленĕ чухне тăвакан йăнăшсемпе тата монополипе хирĕç кĕрешмелли саккунлăха пăснин сăлтавĕсене, Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленийĕпе Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен ĕç тăвакан канашĕ хушшинчи килĕштерсе ĕçлесси пирки тунă килĕшӳ мĕнле пурнăçланнине тата Улатăр, Сĕнтĕрвăрри тата Шăмăршă районĕсен администрацийĕсем республика бюджетĕнчен 2012-2013 çулсенче уйăрнă укçа-тенкĕпе мĕнле усă курнине тишкерчĕç.

Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта тĕрĕслевпе сăнав органĕсем тĕрлĕ документаципе кирлĕ хутсем ярса пама 7267 хут ыйтнă. Кам ытларах мĕнпе кăсăкланнине вĕсен ыйтăвĕсенченех туйса илме пулать: прокуратура – 2710 хут, ШĔМ – 742, Росреестр – 740, МЧС – 433, суд приставĕсем – 339, УФАС – 312. Чылай кăлтăк-çитменлĕхе тĕрĕслев вăхăтĕнчех пĕтерне.

Тĕрĕслевçĕсем те, влаç тытăмĕсен ертӳçисем те нумай йăнăша специалистсем саккунлăха япăх пĕлнипе тата юристсен пĕлӳ шайĕ пĕчĕккипе тунине çирĕплетеççĕ. Ку ыйту апла тăк çак специалистсене хатĕрлесе кăларакан аслă шкулсен ертӳлĕхне те пырса тивет.

Ларура тĕрĕслевçĕсен хăш-пĕр ăнланма йывăр саманчĕ çинчен те сăмах пулчĕ. Тĕслĕхрен, кăçалхи çĕртме уйăхĕнче Патăрьел районĕнчи Шăнкăртам ял тăрăхне пĕр сăлтавпа тапхăрпа танлаштарсан, палăрмаллах ӳснĕ.



Чăваш Ен Пуçлăхĕ федерацин тата Чăваш Енри тĕрĕслевпе сăнав органĕсене вырăнти влаç тытăмне çав териех «сехĕрлентерме» кирлĕ, предписанисем пурнăçлама май çуккисен шутĕнчен пулмалла марри пирки асăрхаттарчĕ. Унсăрăн вĕсен усси сахалли е ĕç кăтартăвĕнче пачах тӳнтерле çаврăнса тухасси çинчен каларĕ. Çав вăхăтрах икĕ енне те – муниципалитет влаç тытăмĕнчисене те, тĕрĕслевпе сăнав органĕсен ертӳçисене те – ӳпкев сăмахĕ тиврĕ. Патшалăх пурлăхне, çĕр лаптăкĕсене сутнă тата аукционсем ирттернĕ чухне шанчăксăр подряд организацийĕсем мала тухнă тĕслĕхсем пулнă. Каярахпа вĕсемпе тунă килĕшӳсене пăрахăçлаттарма çав тери йывăррине палăртрĕ. Михаил Васильевич каланине федерацин Монополипе кĕрешекен службăн Чăваш Республикинчи управленийĕн ертӳçи Вячеслав Борисовпа федерацин Патшалăх регистрацийĕн, кадастр тата картографи службин Чăваш Енри управленийĕн ер-

Ведомствăсен специалисчĕсем влаç органĕсен специалисчĕсене нормăпа право акчĕсем тĕрĕс хатĕрлеме, йышăнма пулăшаççĕ, консультацисем ирттереççĕ, семинарсем йĕркелеççĕ, «çавра сĕтел» ĕçне хутшăнаççĕ.

Лару вĕçĕнче вице-премьер – финанс министрĕ Светлана Енилина 2012-2013 çулсенче Улатăр, Сĕнтĕрвăрри тата Шăмăршă районĕсенче тĕллевлĕ уйăрнă укçа-тенкĕпе мĕнле усă курнипе тĕплĕ паллаштарчĕ. Малтанхи икĕ районĕнче, шел, унпа пачах урăх тĕллевпе усă курни çиеле тухнă. Прокуратура пĕтĕм суммăна каялла таварма ыйтнă. Виççĕмĕшĕнче те тĕрлĕ кăлтăк тупăннă. Районсен администрацийĕсен пуçлăхĕсем Николай Рома-

**КĂÇАЛХИ ПĔРРЕМĔШ ÇУР ÇУЛТА ВЛАÇ ТЫТĂМĔНЧИСЕМ ПАТĔНЧЕ ТĔРĔСЛЕВÇĔСЕМ 690 ХУТ ПУЛНĂ. ТĔРĔСЛЕВСЕН ШУЧĔ КВАРТАЛСЕРЕН ӲСНĔ: 234 ТАТА 356. ЫТЛАРАХ ПАЙĔ – ПРОКУРАТУРА «ТӲПИ» – 606 ТĔРĔСЛЕВ. РОСТЕХНАДЗОР 19 ХУТ «КАНĂÇСĂРЛАНТАРНĂ». ТĔРĔСЛЕВСЕН ПĔТĔМЛЕТĔВĔПЕ 767 ÇЫННА /ВĔСЕНЧЕН 765-ШĔ – ДОЛЖНОÇРИ, ИККĔШĔ – ЮРИДИЦИ СĂПАЧĔЛЛĔ/ ЯВАП ТЫТТАРНĂ, ПĔРИН ТĔЛĔШĔПЕ УГОЛОВЛĂ ĔÇ ПУÇАРСА СУДА ÇИТЕРНĔ**

Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта влаç тытăмĕнчисем патĕнче тĕрĕслевçĕсем 690 хут пулнă. Тĕрĕслевсен шучĕ кварталсерен ӳснĕ: 234 тата 356. Ытларах пайĕ – прокуратура «тӳпи» – 606 тĕрĕслев. Ростехнадзор 19 хут «канăçсăрлантарнă». Тĕрĕслевсен пĕтĕмлетĕвĕпе 767 çынна /вĕсенчен 765-шĕ – должноçри, иккĕшĕ – юридици сăпачĕллĕ/ явап тыттарнă, пĕрин тĕлĕшĕпе уголовлă ĕç пуçарса суда çитернĕ. Штраф санкцийĕсен сумми те пĕчĕкех мар: должноçри çынсене 333 пин тенкĕ, юридици сăпачĕллисене 20 пин ытла тенкĕ тӳлеттернĕ.

/санкци илмен çӳп-çап куписем пирки/ хярăсах виçĕ ведомство – Чăваш Республикин Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви, Россельхознадзор, Роспироднадзор – тĕрĕсленĕ, виççĕшĕ те ял тăрăхĕн пуçлăхне пĕр айăпшăнах тĕрлĕ суммăлăх /пĕтĕмĕшле вăл пĕчĕк те мар/ штраф панă. Тĕрĕслевсен шучĕ, вăтамран илсен те, иртнĕ çулхи çав тӳçи Екатерина Карпеева тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕç, чылай ыйтăва хуравларĕç.

Ларура юлашки вăхăтра икĕ енлĕ хутшăнусем лайăхланса-çирĕпленсе пынине палăртрĕç. Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен ĕç тăвакан канашĕн дирекцийĕ Юстици министерствипе, прокуратурăпа, МЧСпа тата ытти тытăмпа тачă çыхăну йĕркеленĕ.

нов, Владимир Григорьев тата Валерий Фадеев малашне кун пекки текех пулмасса шантарчĕç.

Михаил Игнатьев ларăва «Пĕрпĕрне ăнланса, пулăшса ĕçлесен сахалрах йăнăшăпăр, явап тыттарасси те чакĕ, усси вара ытларах пулĕ», – тесе пĕтĕмлетрĕ.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ

# Çĕр улмине ку эрнере кăларса пĕтересшĕн

## Кĕрхи ĕçсенче Куславккасем те маттур



***Кăçал карчăк ăшши хресчене савăнтарчĕ: уй-хирте ĕç шавĕ самантлăха та чакмасть.***

Республикăри ял хуçалăх организацийĕсемпе пысăк хресчен-фермер хуçалăхĕсем авăн уйăхĕн 22-мĕшĕ тĕлне 258601 гектар çинчен /99,4%/ пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене пухса илнĕ. Улатăрпа /88,2%/ Шупашкар /97,3%/ районĕсемсĕр пуçне ыттисем вырмана вĕçленĕ.

565443 тонна тырă тĕшĕленĕ. Кăçал тухăç пысăкраххи /21,9 ц, пĕлтĕр – 18,2 ц/ сухалакан лаптăка хушăнтарнинчен /264611 га, 2013 ç. – 226380 га/ килнĕ. Çав вăхăтра аграрисен хастарлăхне те, технологие тĕрĕс те çирĕп пăхăннине те асăнмалла.

Тырă нумай туса илессипе 4 района палăртмалла, вĕсем 40 пин тоннăран иртнĕ: Вăрнарсем /44739/, Çĕрпӳсем /44113/, Патăрьелсем /42765/, Елчĕксем /41514/. Тата çиччĕшĕн кăтартăвĕ 30 пин тонна ытларах.

Çĕр ĕçченĕсем авăн уйăхĕн 22-мĕшĕ тĕлне 7987 га çĕр улми кăларнă /90,7%, пĕлтĕр – 44,4%/. Вăтам тухăç 157 центнер /152,8 ц/. Çанталăк лайăх тăнăран хăвăртлăх кунсерен ӳсет. Юлашки 4 кунра Комсомольскисем 258 га /22,4%/, Патăрьелсем 184 га /10,4%/, Куславккасем 139 га /15,1%/ "иккĕмĕш çăкăра" уй-хиртен пуçтарса кĕнĕ. Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпӳ, Çĕмĕрле, Етĕрне районĕсем плана тултарнă.

Тунти кун Куславкка тăрăхĕнче пултăмăр. Ку ен республикăра чи пысăк лаптăксенче çĕр улми туса илекенсенчен пĕри. Патăрьелсемпе /1768 га/ Комсомольскисем /1153 га/ çеç вĕсенчен нумайрах лартнă.

– Пирĕн 888,8 гектар çинчен пухса кĕртмелле. Хальлĕхе ĕçе 785 гектар çинче пурнăçланă. Çанталăк чăрмантармасан ку эрнере кăларса пĕтеретпĕр, – терĕ район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи Юрий Забраев.

"Иккĕмĕш çăкăра" ял хуçалăх предприятийĕсенчен "Куснар" агрофирма çеç туса илет. Унăн лаптăкĕ 189 га йышăнать, хальлĕхе 134 га кăларнă. Ыттине – 700 гектара яхăн – хресчен-фермер хуçалăхĕсем çитĕнтереççĕ. Геннадий Сорокин, Василий Семенов, Олег Мыков, Елена Васильева тата хăш-пĕр ХФХ тĕллеве пурнăçланă.

Фермер Куснар ял тăрăхĕнче уйрăмах йышлă. "Ял хуçалăх производствинче вĕсен тӳпи чăнласах пысăк", – каласăва хутшăнчĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Утемов.

– Кăçал пирĕн тăрăхра çу типĕ тăчĕ: çумăр пĕр пĕрчĕ те ӳкмерĕ. Çавăнпа çĕр улми туса илекенсем лаптăксене шăварчĕç, вăл шутра "Куснар" агрофирма та, – терĕ Юрий Александрович.

Эпир райадминистрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕн çумĕпе Алексей Андреевпа "Куснар" хуçалăха çул тытрăмăр. Кунта "Колобок" сорт

**Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин кăтартăвĕсем тăрăх, авăн уйăхĕн 22-мĕшĕ тĕлне**

Цифрăсен пĕрремĕшпе иккĕмĕш колонкисем – çĕр улми кăларнă /гектарпа тата процентпа/, виççĕмĕшĕ – гектар тухăçĕ /центнерпа/, тăваттăмĕшĕпе пиллĕкмĕшĕ – кĕрхи культурăсем акнă /гектарпа тата процентпа/

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Патăрьел | 1761 | 99,6 | 137,2 | 5066 | 76,8 |
| Комсомольски | 980 | 85 | 160,1 | 5102 | 100 |
| Куславкка | 785 | 85,3 | 173 | 3279 | 91,1 |
| Елчĕк | 726 | 98,6 | 123 | 5711 | 100,2 |
| Вăрмар | 649 | 92,8 | 182,5 | 4206 | 72,5 |
| Вăрнар | 500 | 90,7 | 205,3 | 4205 | 67,8 |
| Элĕк | 492 | 77,6 | 163,2 | 3003 | 88,3 |
| Етĕрне | 339 | 100 | 185,2 | 4250 | 70,8 |
| Муркаш | 320 | 99,1 | 150 | 5800 | 100 |
| Сĕнтĕрвăрри | 261 | 66,9 | 159 | 2570 | 88,6 |
| Канаш | 226 | 100 | 170,4 | 4500 | 75 |
| Красноармейски | 217,5 | 99,3 | 154,9 | 3150 | 78,8 |
| Çĕрпӳ | 197 | 100 | 130,5 | 6501 | 92,9 |
| Тăвай | 175 | 91,1 | 134,9 | 2850 | 75 |
| Шăмăршă | 127 | 80,4 | 165,4 | 3200 | 84,2 |
| Шупашкар | 79 | 77,5 | 202,5 | 3890 | 77,8 |
| Улатăр | 65 | 71,4 | 98,2 | 6007 | 107,3 |
| Йĕпреç | 60 | 80 | 133 | 2686 | 86,6 |
| Хĕрлĕ Чутай | 18 | 100 | 149 | 1516 | 75,8 |
| Çĕмĕрле | 7 | 100 | 100 | 1097 | 54,9 |
| Пăрачкав | 2 | 66,7 | 150 | 6650 | 100,8 |
| Республикипе /22.09.14/ | 7987 | 90,7 | 157 | 85239 | 85,2 |
| Республикипе /22.09.13/ | 5550 | 44,4 | 152,8 | 70065 | 70,1 |

лартнă. Шурă вăл, шултра çитĕннĕ. Хальлĕхе унăн тухăçĕ 180,7 ц, республикăри тата районти вăтам кăтартуран пысăкрах.

– Районта хире çĕр улми кăларма 22 комбайнпа 30 копалка тухнă. Копалкăллисем палăртнине пурнăçланă. Агрофирма уйĕнчи комбайнсене Павел Арланов, Анатолий Бильтяев, Юрий Ефремов механизаторсем пĕр тикĕссĕн ĕçлеттереççĕ. Кăларнă çимĕçе автомашинăсем йĕтеме турттараççĕ.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# Чăваш хутлăхĕнче çитĕннĕ атлетсем çунат сарайманççĕ

## Мĕншĕн ял спортсменĕсен сасси илтĕнмест?

Çак ыйту шухăша ячĕ мана Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форум çывхарнă май. Спорта ялтан тухнă атлетсемпе велосипедçăсем çӳллĕ шая çĕкленĕ, пирĕн ентешсем тĕнчери чи пысăк ăмăртусенче палăрса Чăваш Ене чапа кăларчĕç. Республика чысне паян камсем хӳтĕлеççĕ-ха?

Ĕлĕкрех, физкультура коллективĕсем вăй илнĕ вăхăтра, тĕрлĕ сферăра тăрăшакансем ĕçпе спорта шайлаштарса пынă. «Урожай» спорт обществи те ял спортсменĕсене пулăшу панă, ăмăртусем йĕркеленĕ, спорт хатĕрĕсемпе тивĕçтернĕ. Кашни предприяти-организацирех спорт енĕпе ĕçлекен инструкторсене те манман-ха аслăрах ӳсĕмрисем, ун чухне спорт секцийĕсене те уçма май тупнă. Шел те, хальхи вăхăтра ял спорчĕн шайĕ те пĕчĕкрех. Ял спорт вăййисенче те профессионал спортсменсем ытлараххине сăнатпăр. Халĕччен унта завод-фабрикăра, колхоз-совхозра вăй хуракан çын чапа тухнă. Профессионалсен тренировка ирттерме те майсем ытларах, вăхăчĕ те пур.

Республикăри ăмăртусем ытларах Шупашкарта иртни те çамрăк спортсменсене унта тухса çӳреме йывăртараххине палăртаççĕ тренерсем. Район центрĕсемпе пысăк хăш-пĕр ялта чаплă керменсем спортпа туслисемшĕн тĕп вырăн пулса тăчĕç. Анчах та ФСКсене çитме май çуккисен мĕн тумалла-ши? Çакă та ял спортсменĕсене ят илме чарса пырать. Тĕрĕссипе, хальхи вăхăтра спорта парăннă çын кăна чаплă атлет пулма пултарать. Тĕслĕхрен, хамăр ялти пĕр яш кашни кун тренировкăна тухнине куратăп. Çакнашкал маттурлăхпа палăракан кăна хăйĕн пурнăçне спортпа çыхăнтарĕ ахăртнех.

«Ялта пурăнакансем кахалланчĕç: пахчара та çимĕç лартса çитĕнтерме ӳркенеççĕ, хăшĕ-пĕри пахчара чечек те пулин ӳстерет-ха. Ĕне-выльăх усрама пăрахрĕç. Чăх та пулин тытасчĕ. Япали çук та ĕçĕ те çук тесе алă сулаççĕ кăна. Вĕсен ачисем ĕç тĕлне пĕлсе ӳсмеççĕ паллах. Машина, велосипед, чаплă компьютер тата ун йышши техникăна илсе парса курнăçланнипех мăнаçланаççĕ халĕ», – хĕрӳленсе калаçнăччĕ пĕр пĕлĕшĕм. Ун сăмахĕсенче те тĕрĕслĕх пурах. Наян та ĕç тути-масине пĕлмен çамрăкран спортсмен пулатех-ши вара?

Пирĕн паллă олимпçăсене аса илер-ха. Чăваш спортсменĕсенчен Олимп вăййисене пĕрремĕш хутшăннă Ардалион Игнатьев, Олимп чемпионĕсем Валерин Соколов, Елена Николаева, Валентина Егорова, Валерий Ярды, тĕнчери чи пысăк ăмăрту призерĕсем Ирина Калентьева, Олимпиада Иванова, Татьяна Архипова, Владимир Андреев, тĕрлĕ чемпионатра палăрнă Николай Пуклаков, Светлана Захарова, Алина Иванова, Альбина Майорова тата ыттисем – пурте ялта çитĕннĕ. Вĕсен ашшĕ-амăшĕ рабочи е колхозник пулнă, ачисене ĕçе юратма вĕрентнĕ. Ялта ĕçлесе туптаннă вăй-халĕ вĕсене ăмăртура мала тухма пулăшнă. Паллах, çав вăхăтра ĕçленĕ тренерсене манмалла мар.

Сумлă спортсменсем çамрăк чухне спорт шкулĕсене те çӳремен, тренировка ирттермешкĕн те услови пулман. «Вĕсене çут çанталăк пултарулăх, чăтăмлăх, ĕçченлĕх панă, тренерсем вара çак енсене аталанма пулăшнă», – тенĕччĕ паллă пĕр тренер. Хальхи вăхăтра çултан çул чаплă керменсем çĕкленеççĕ, вĕсем кашни çынна хăтлăхĕпе тата пуянлăхĕпе тĕлĕнтереççĕ. Çапах та яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа илĕртмест вăл, унта çитсе алла мечĕк илме, шыва кĕме, коньки çине тăма васкамаççĕ вĕсем.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**



**Светлана ЗАХАРОВА, РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ, паллă марафонçă:** «Эпĕ ялта çитĕнннĕ. Пĕчĕклех ĕçлесе ӳснĕ. Йывăр ĕçрен нихăçан та пăрăнас темен. Выляма та вăхăт сахалччĕ пирĕн. Кашни кун шкула çуран çӳренĕ. Юрлă-и, çумăрлă-и – пăхса тăман, 8 çухрăм утнă, хушăран ăмăртмалла та чупнă. Чăваш çынни ĕçченлĕхĕпе тата чăтăмлăхĕпе палăрса тăрать. Марафон чупнă чухне çак пахалăхсем питĕ пĕлтерĕшлĕ».

**Мевлет ЗЕЙНЕТДИНОВ, ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ, тĕнче рекордсменкин Александра Деверинскаян пĕрремĕш тренерĕ:** «Паянхи яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа спорта явăçтарма çăмăлах мар. Тренерсемпе учительсем çине тăмасан пĕр-пĕр ăмăртăва хутшăнас текен çамрăк та тупаймăн. Спорт еннелле туртăнакансем, спортсменăн çăмăл мар çулĕ çине тăма шикленменнисем те пур, анчах питĕ сахал. Паллах, вĕсене çухатмалла мар пирĕн, малашлăхра çул кăтартса пымалла».



**Валерий НИКИТИН, Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуçри вăтам шкул учителĕ:** «Шкулта ача йышĕ çултан çул сахалланнă май пултарулисене тупма йывăрланса пырать. Мĕншĕн тесен хальхи çамрăксем пушă вăхăта ытларах компьютер-телевизор умĕнче ирттереççĕ. Пирĕн шкула темиçе ялтан вĕренме çӳреççĕ, анчах вĕсене автобуспа илсе килеççĕ. Пĕр енчен лайăх ку, тепĕр енчен – çитменлĕх. Çамрăк чухне эпир çак шкула кӳршĕ ялтан çуран е велосипедпа васкаттăмăр, çавăнпах паянхи кун та сывă пурнăç йĕркине пăхăнатпăр».



**Юрий ПЛОТНИКОВ, РФ Журналистсен союзĕн членĕ, спорт ветеранĕ:** «Ял спортсменне çитĕнтермешкĕн çăмăлах мар: пĕр енчен – ял-салара çамрăк сахал; тепĕр енчен – вĕсене аталанмашкăн услови те çукпа пĕрех. Районти ăмăртусене хутшăнакансен йышĕ пысăк-ха, анчах унта палăрнисене çӳлерех çĕкленмешкĕн пулăшу кирлĕ. Ĕлĕкрех ялти спортсмен чысхисепре пулнă. Аслă ӳсĕмрисен хушшинче Вăрнарта пурăнакан, унти техникумра ĕçлекен Галина Павловăна питĕ лайăх паллатăп. Вăл йĕлтĕрпе чупассипе тата кросс турнирĕсенче малти вырăнсене йышăнать, ял спорт вăййисенче районпа республика чысне хӳтĕлет. Çĕрпӳ тăрăхĕнчи Вениамин Трофимов та чăн-чăн ял спортсменĕ. Çамрăках мар пулин те халĕ те тĕрлĕ чупăва хутшăнать, вăл тăрăшнипех районта «Паттăрлăх çулĕпе» ăмăрту иртет».

ЫЙТУ-ХУРАВ

# Украинăран килтĕм те...

**Эпĕ – Украина гражданинĕ, кунта ĕçе вырнаçасшăн. Ĕç хутшăнăвĕсене çирĕплетме предприятире документсем ыйтаççĕ. Манăн кадрсен пайне мĕнле документсем памалла? Манпа мĕнле килĕшӳ тăвĕç, ĕç кĕнеки пулĕ-и?**

**Н.ШЕВЧЕНКО.**

Ыйтăва **Шупашкарти Ленин районĕн прокурорĕн аслă пулăшуçи Фариза Кадырова** хуравларĕ:

– Ют çĕр-шыв гражданинне, РФ территорине визăсăрах килмелли йĕркепе килнĕскере тата ĕçлеме ирĕк пурскере, ĕçе йышăнакан организаци ют çĕр-шыв çыннисен ĕçĕпе усă курмалли ирĕк илмесĕрех ĕçлеттерме пултарать. Анчах унăн ĕç е граждан-право килĕшĕвĕ тунă хыççăн виçĕ ĕç кунĕнче çакăн çинчен РФ ФМСĕн территори органне тата ĕç тăвакан влаç органне пĕлтермелле.

Асăннă органсемсĕр пуçне ĕç паракан организацин ют çĕр-шыв çыннипе ĕç килĕшĕвĕ тунă хыççăн 10 кунра ют çĕр-шыв çыннисене ĕçе явăçтарни çинчен хăйне шута илнĕ налук органне пĕлтермелле.

Ĕçлемешкĕн кунта вăхăтлăх пулакан, çавăн пекех вăхăтлăх пурăнакан ют çĕр-шыв гражданинĕн кирек мĕнле пулсан та федерацин миграци сферинчи ĕç тăвакан влаç органĕнче е унăн территори органĕнче ĕçлемелли ирĕк илмелле.

Урăхла каласан ĕçе кĕнĕ чух ют çĕр-шыв гражданинĕн ĕç паракана ĕçлемелли ирĕк кăтартмалла. Ăна улталаса хатĕрлесрен лайăх хӳтĕленĕ тата стандартлă виçеллĕ пластик карточка пек бланк çинче тăваççĕ. Ĕçлемелли ирĕке миграци службин органĕн ертӳçи, ĕçлемелли ирĕк пама йышăннăскер, полномочи панă должноçри çын алă пусать, çак орган пичечĕпе çирĕплетеççĕ.

Ытларах чухне ĕçлемелли ирĕке тĕрĕслев органĕсене /полицие, миграци органĕсене/ кăтартма тивнине кура вăл ют çĕр-шыв çыннин хăйĕн аллинче, çавна май ăна ĕçе йышăннă чухне ĕç паракана çав ирĕкĕн тата ют çĕр-шыв çыннин миграци карточкин копийĕсене хатĕрлеме, вĕсене кадр документчĕсемпе пĕрле упрама сĕнеççĕ. Çак кописем сирĕн организацие ĕçлев инспекцийĕ ют çĕр-шыв çыннисене ĕçлеттерекен предприятисенче тĕрĕслев ирттернĕ чухне кăтартмашкăн кирлĕ пулма пултараççĕ.

Çакна та палăртмалла: РФ Ĕçлев кодексĕн 11 статйипе килĕшӳллĕн ĕçлев саккунĕсем ют çĕр-шыв гражданĕсемпе çыхăннă ĕçлев хутшăнăвĕсене те туллин пырса тивеççĕ. Апла тăк ют çĕр-шыв çыннипе ĕç килĕшĕвĕ тусан унăн ĕç паракана Ĕçлев кодексĕн 65 статйинче палăртнă документсене те кăтартмалла: паспорт е çын кам пулнине ĕнентерекен урăх документ, ĕç кĕнеки /пуçласа ĕç килĕшĕвĕ тунă е çын хушма ĕçе кĕнĕ тĕслĕхсемсĕр пуçне/, ятарлă пĕлӳ е хатĕрленӳ кирлĕ ĕçе вырнаçнă чухне – вĕренние, квалификаци е ятарлă пĕлӳ илнине ĕнентерекен документ.

■ **К.АНТОНОВ ыйтса пĕлнĕ**



# Хушма кăларăм
# Тăван ен

ПАРХАТАРЛĂХ

## Медицина çынна сыватать, ветеринари – этемлĕхе

### Пĕрремĕш Петĕр патша çапла каланă: "Пурнăçра питĕ кирлĕ специальноç ку!"

***Халĕ ветеринарсен те професси уявĕ пур. Раççей премьер-министрĕ Дмитрий Медведев йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн ăна çурла уйăхĕн 31-мĕшĕнче палăртаççĕ. Çак кун православи тĕнне ĕненекенсем асап тӳснĕ сăваплă Флорпа Лавра асăнаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем выльăх-чĕрлĕхе тĕрлĕ инкек-синкекрен сыхлакансем шутланаççĕ. Унччен ветслужба ĕçченĕсем уява ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноçра вăй хуракансемпе пĕрле кĕтсе илнĕ.***



● *Ю.Игнатьев /сулахайран иккĕмĕшĕ/ республикăри ветеринари специалисчĕсен семинарĕнче.*

Выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешесси агропромышленноç комплексĕн тытăмне кĕрет пулсан та ку профессие малашне уйрăммăн палăртасси ăнсăртран çуралман. Халăх хуçалăхĕн аталанăвĕнче ветслужба тӳпи вышкайсăр пысăк.

Пĕрремĕш Петĕр патша ахальтен мар çапла каланă: "Пурнăçра питĕ кирлĕ специальноç ку!" Халăх хушшинче Христос тĕнне анлă сарнă Владимир кнеç те пăсăлнă аш çитерекен пуçне касма указ кăларнă.

Патшалăхăн ветеринари органĕ çĕр-шывра пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пурнăçлать. Республика ветслужби ветстанцисене ертсе пырать. Унсăр пуçне патшалăх тĕп ветинспекцийĕ пур. Вăл ветслужба епле ĕçленине, районсенчи станцисем саккунсене епле пурнăçланине тĕрĕслет. Кирлĕ чухне асăрхаттарать, явап та тыттарать.

Паян ветслужбăра 880 çын ĕçлет. Вĕсем çулсерен мăйракаллă шултра выльăха – 10, лашасене – 9, сурăхкачакана – 12, чăх-чĕпе – 7, хурт-хăмăра – 7, пĕве пуллисене – 6, сыснасене 10 чиртен сыхлама профилактика ĕçĕ пурнăçлаççĕ. Кăçалхи çур çулта уртаракан чир ан çулăхтăр тесе 45532 ĕне выльăха, 1193 лашана, 37073 йытта, 9618 кушака вакцинациленĕ. Кашни чĕр чун çулталăкра специалист алли витĕр темиçе те тухать.

Ветеринарсем ăсчахсен вĕрентĕвне тĕпе хурса ĕçленĕрен çĕр-шывра нумай чире вуçех пĕтернĕ. Лашасем анеми, сап чирĕсемпе текех асапланмаççĕ. Ĕнесене ӳпке шыççи, нăрă чирĕ ермест. Сыснасен мур /классическая чума/ сайра хутра анчах палăрать.

Ветслужба республикăна урăх çĕр-шывсенчен е регионсенчен кӳрсе килекен выльăха, аш-какая тĕрĕслесех тăрать. Чăваш Ен тулашне те тивĕçлĕ документсăр кăлармасть. Апат-çимĕç хатĕрлемешкĕн усă курма юраманнине утилизацилеççĕ.

Ислам тĕнне ĕненекенсем сысна какайне çимеççĕ. Ĕлĕк-авал пĕр йăх ăна пула чирлесе вилнĕ. Аш-какая лабораторире çирĕп йĕркепе тĕрĕслеме йышăннă. Выльăха тăмха çапмасăр сутма, какайпа клеме лартмасăр усă курма юрамасть.

Ветврачсен, фельдшерсен, санитарсен Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчи ĕçĕ пархатарлă. Фронта 2 млн лаша янă. Нумайăшĕ аманса сывалнă хыççăн вăрçă вутне тепĕр хутчен кĕнĕ. 1 млн ут çапăçу хирĕнче выртса юлнă.

Паллă ветврач Сергей Евсеев: "Медицина çынна сыватать, ветеринари – этемлĕхе", – тени ĕмĕрне те чăнлăхне çухатмĕ.

■ **Юрий ИГНАТЬЕВ,**
**ветврач**

✓ ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ЧИРĔСЕМПЕ КĔРЕШЕССИ АГРОПРОМЫШЛЕННОÇ КОМПЛЕКСĔН ТЫТĂМНЕ КĔРЕТ ПУЛСАН ТА КУ ПРОФЕССИЕ МАЛАШНЕ УЙРĂММĂН ПАЛĂРТАССИ ĂНСĂРТРАН ÇУРАЛМАН. ХАЛĂХ ХУÇАЛĂХĔН АТАЛАНĂВĔНЧЕ ВЕТСЛУЖБА ТӲПИ ВЫШКАЙСĂР ПЫСĂК

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

## Çĕрпе тухăçлă хăçан усă курăпăр?

### Хăшĕ-пĕри пай лаптăкне харпăрлăха илессине вăраха янă

***Хыт хура пуснă çĕр ыйтăвĕ юлашки çулсенче мĕн чухлĕ калаçтармарĕ-ши? Тахçанах татса памалла та ăна, анчах васкавлă йышăну тума çĕр саккунĕн хăйне евĕрлĕхĕ-кăткăслăхĕ ура хурать. Харпăрлăхçă «çухалнă» – шыраса тупмалла, вилнĕ – еткерçĕ йĕрĕ çине ӳкмелле. Çĕрпе усă курма пăрахнă – ăна урăх хуçана парса çирĕплетме виçĕ çултан сахал мар кĕтмелле. Вăхăт вара – шав малалла.***



Ачисем тĕнче тăрăх саланнă, хăйсем кĕреçе тытайми пулнă ватăсен пайĕсем хыт хура айне пулаççĕ. Муниципалитетсенче пусă çаврăнăшне кĕмен лаптăк пайтах. Шупашкар районĕнче те вĕсем сахал мар.

Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр 62,1 пин гектар йышăнать. Вăл шутра 27,9 пин га – ял хуçалăх предприятийĕсен, 16,8 пин га – çĕр пайĕсен харпăрлăхçисен, 11,7 пин га – ял тăрăхĕсен. 2 пин га çинче – садсем, 1,3 пин га çинче хресчен-фермер хуçалăхĕсем, ытти категори вырнаçнă.

Пусă çаврăнăшне кĕртмен лаптăксемпе епле усă курнине палăртма кăçалхи çу уйăхĕнче инвентаризаци ирттернĕ. 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне усă курман çĕре 4019 га шута илнĕ. Çавна май сухалаканни 82% çитнĕ /2013 çулхи чӳк уйăхĕнче – 78,5%, усă курман лаптăк 6162 га пулнă/. Кăçалхи çуркунне пусă çаврăнăшне 1469 га кĕртнĕ. Тăватă хуçалăх уйрăмах лайăх ĕçленĕ: «Чăваш бройлерĕ» АУО – 480, «Атлашевский» ЯХК – 187, «Приволжское» АУО – 175, «Чурачикское» АУО 175 гектар пысăклатнă. Çĕньял, Ишлей ял тăрăхĕсем харпăрлăхçăсен пайĕсене çаврăнăша 500 га хушнă.

– Вырăнта пухусем иртеççĕ. Çынсем пайсене тара параççĕ, анчах пурте хăйсем çине куçарма ĕлкĕреймен. Регистраци палати витĕр тухмалла, çĕре кама та пулин парас тĕллевпе нотариус патĕнче шантару хутне çирĕплетмелле. Ĕçĕ нумай. Ял халăхĕ вара унта та, кунта та каясшăн мар. Хăйсен мăранлăхне пула пай лаптăкĕсене харпăрлăха куçарттарас ĕçе тăсса пыраççĕ. Тивĕçлĕ документсемсĕр пай çĕрĕ çине никам та пырса кĕреймест, ăна тара та илеймест, – тет Шупашкар район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – ял хуçалăх пайĕн ертӳçи Сергей Ванюшкин.

«Халĕ усă курман тата тухăçсăр усă куракан мĕн пур çĕр лаптăкĕн реестрне тăвассине тивĕçтермелле. Асăннă ĕçĕн тухăçлăхне ӳстерме «халăх инвентаризацийĕн» мелĕпе усă курма пулать, урăхла каласан – хуçасăр çĕр лаптăкĕсене граждансем пулăшнипе тупса палăртмалли мелпе, – тенĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ 2014 çул валли ЧР Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче. – Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен умне тĕллев лартатăп: сывăх икĕ çулта ирĕклĕ çĕр лаптăкĕсене туллин инвентаризацилессине тата вĕсене йĕркелесе çитерессине туса ирттермелле. Ку енĕпе тумалли иккĕмĕш утăм – йĕркелесе çитернĕ çав çĕрсене пулас инвесторсене хăйсен проекчĕсене пурнăçлама аукцион урлă уйăрса парасси».

Усă курман лаптăксенче уйрăм çын пайĕ пысăк вырăн йышăнать. Вăхăт иртнĕрен вăл хыт хура, вĕтлĕх айне пулать. Тахçан акнă курăк та шĕвелет.

Анана 3 çул сухаламасан, улăхçаранри утта çулма пăрахсан, ăна та, нумай çул ӳсекен курăклă лаптăка та 15% ытла йывăç-тĕм е 30% ытла çум курăк пуссан усă курман çĕр шутланаççĕ. Тивĕçлĕ органсем штраф ан хуччăр тесен çулленех сухаламалла, ял хуçалăх культурисем туса илмесен те выльăх апачĕлĕх курăк та пулин çитĕнтермелле. Анчах нумайăшĕн техника та, нумай çул ӳсекен курăка çĕнетме вăрлăх та çук. Çавăнпа та: «Пире пай кирлĕ мар», – теççĕ. Шупашкар районĕнчи Ишек, Çĕньял, Шемшер, Чăрăшкасси ял тăрăхĕсенче унашкал çĕр нумай.

Патшалăх çĕрпе тухăçлă усă курман хуçасенчен çирĕп ыйтать. 2014 çулхи нарăсăн 15-мĕшĕнче «Раççей Федерацийĕн Административлă правăна пăсни çинчен калакан кодексне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккун вăя кĕнĕ. Унпа килĕшӳллĕн ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрпе усă курманшăн айăпламалли штрафсене çĕрĕн кадастр хакне /ÇКХ/ граждансемшĕн – 0,3-рен 0,5%, должноçри çынсемшĕн 0,5-рен 1,5%, анчах 3 пин тенкĕрен кая мар, юридици сăпачĕсемшĕн 2-рен 10%, анчах 200 пин тенкĕрен кая мар пысăклатса çирĕплетнĕ.

Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрпе усă курманшăн налука çĕрĕн кадастр хакĕнчен 0,3-рен 1,5% çитернĕ /5 хут хаклатнă/. Шемшер ял тăрăхĕнчи 49 çынна çĕр саккунне пăхăнманшăн пысăклатнă ставкăпа налук хунă.

– Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта районти вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тата Росреестр управленийĕ юридици сăпачĕсен тĕлĕшпе 26 тĕрĕслев ирттернĕ, уйрăм çынсен лаптăкĕпе 189 хутчен кăсăкланнă, вĕсене 37,5 пин ытла тенкĕлĕх штраф панă, – терĕ Сергей Алексеевич. – Хушу панă хыççăн Çĕньял ял тăрăхĕнчи «Вăтам Атăл» АУО – 250, Вăрман Çĕктер ял тăрăхĕнчи «Алмаз» ООО – 53,3 га, Шĕнерпуç ял тăрăхĕнчи «Чăвашагромаркет» ЯХПК – 46, Чăрăшкасси ял тăрăхĕнчи «Велес» ООО – 52,8, Атайкасси ял тăрăхĕнчи «Сад» ЯХПК 200 га сухаланă.

– Чылайăшĕ пая харпăрлăха куçарнине çирĕплетекен свидетельство илнĕ, анчах техникăсăр тата вăй çитменрен унпа усă кураймасть. Пĕччен пурăнакан ватăсем ăçтан хал çитерччĕр! – тĕлĕнет Ишек ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Анатолий Максимов. – Уй çу каçипех чăпар курăнчĕ. Пĕрин лаптăкĕ ем-ешĕл, юнашарах – çум курăклă. Усă курма ирĕк парсан та техникăпа лайăх лаптăк урлă каçаймăн. Кун пек чухне кӳршĕсен сĕтел хушшине ларсах калаçса татăлмалла – вăйлин халсăррине пулăшмаллах.

■ **Валентин ВАЛЕНТИНОВ**

✓ АЧИСЕМ ТĔНЧЕ ТĂРĂХ САЛАННĂ, ХĂЙСЕМ КĔРЕÇЕ ТЫТАЙМИ ПУЛНĂ ВАТĂСЕН ПАЙĔСЕНЕ ХЫТ ХУРА ПУСАТЬ. МУНИЦИПАЛИТЕТСЕНЧЕ ПУСĂ ÇАВРĂНĂШНЕ КĔМЕН ЛАПТĂК ПАЙТАХ. ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧЕ ТЕ ВĔСЕМ САХАЛ МАР

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

## Улми йывăççинчен аякка ӳкмест

### Етĕрне районĕнчи Хурамалăхри Ефимовсене Чăваш Енре 2013 çулта ĕçченлĕхпе çитекен пулман

***Республикăра çулталăкри чи лайăх çемьене халалласа çуллен конкурс иртет. Унта уйрăм номинацире чи ĕçчен кил-йыша та палăртаççĕ. Çĕнтерӳçĕсемпе кашни çулах тĕл пулатăп, танлаштарса пăхатăп. Пĕрешкелли, вĕсене пĕрлештерекенни чылай. Йышлă ача çитĕнет кунашкал килте, кĕçĕннисем аслисене пула тĕрлĕ ăсталăхпа паллашса ĕçчен те тăрăшуллă ӳсеççĕ.***



Çак çемьесем ялан тенĕ пекех – ялсенчен. Хушма хуçалăха аталантараççĕ: ял хуçалăх культурисем туса илеççĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетеççĕ... Çитĕннисенчен хăшĕ те пулин ял хуçалăх производствинче вăй хурать. Ырă пахалăхсене пула çамрăк ăру çуралнă тăрăха савса, тăван çĕре юратса ӳсет. Çитĕнсен вуннăшĕнчен пĕри яла юлсан та тем пекех. Конкурса "Чи ĕçчен çемье" номинацие кĕртнин пĕлтерĕшне малтанах çакăнта шырамалла пулĕ.

2013 çулта çак номинацире Етĕрне районĕнчи Хурамалăхра пурăнакан Николай Александровичпа Оксана Петровна Ефимовсен кил-йышĕ мала тухнă.

Çемье çирĕплĕхне упрассине, ачисене çитĕнӳсем енне туртăнма хавхалантарассине амăшĕ пысăк тӳпе хывать. Педагог вăл, шкулта ĕçлет. Çĕнĕлĕхсене хăвăрт асăрхать, пурнăça кĕртме тăрăшать, халăхпа хутшăнма кăмăллать.

Ефимовсен хресчен-фермер хуçалăхĕ мар. Апла пулин те картиш тулли выльăх. "Маларах пилĕк ĕнеччĕ, халĕ – виççĕ. Вак выльăх вара чылай", – тет кил-çурт управçи.

Техника енчен те пуян. 3 гектар çĕре ЮМЗ-6Л трактор, ЗИЛ-130 автомашина, "Нива"-СК5М1 комбайн, "Каскад" мотоблок, хăй тĕллĕн çӳрекен "Багги" машина пулăшăвĕпе пăхса тăраççĕ. Хулана кайса килме ВАЗ 21-14 çăмăл автомобиль пур. Унта-кунта тухма çеç мар вăл, Оксана Петровнăна шкула çӳреме те кирлĕ.

Конкурса хутшăнас шухăш-кăмăл епле çуралнă-ха? Ăнсăртран мар паллах. Хăйсен вăй-халне, пĕлĕвне тĕрĕслесе пăхас килни, теветкеллĕх туртăмĕ пурри, пурнăçа тĕрлĕлĕхпе пуянлатас шухăш çурални, чунчĕрене ялан канăç паман ытти пахалăх та малалла ăнтăлма пулăшнă Ефимовсене.

– Темиçе çул каялла Хучаш ял тăрăхĕнчи Ивановсен çемйи республикăра çĕнтернĕ. Çавăн хыççăн пирĕн те конкурса хутшăнас кăмăл çуралчĕ, – тет канăç мĕнне пĕлмен педагог. – Лев Алексеевич пире нумай пулăшрĕ. Портфолиопа паллаштарчĕ. Унччен пирĕн вăл пулман. Кашниех хăйне хăçан тата мĕн хавхалантарнине аса илчĕ, шырав ĕçне кӳлĕнчĕ. Чи малтан шухăшпа мăн асатте-асанне патне çитрĕмĕр. Тĕп килте пурăннăран архив чиперех упраннă.

Ачасем – Юлия, Ефим тата Софья – ырă тĕслĕхпе çитĕнеççĕ. Мăн асламăшĕ 105 çул пурăннă. Паллă çынсем те тухнă ку йăхран. ЧР вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов – вĕсен иккĕмĕш сыпăкри тăванĕ. Николай Александрович пиччĕшĕ Сергей Александрович – ЧР ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Мăшăрĕ Марина Валерияновна – Хучаш шкулĕн директорĕ.

Ашшĕ-амăшĕ ачисен ырă енĕсене те, çитменлĕхĕсене те лайăх пĕлет, воспитание вĕсене шута илет. Ĕçе пысăк пахалăхпа та вăхăтра пурнăçланăшăн пĕчĕкскерсене ăшă сăмах, уяв сĕтелĕ кĕтет. Кану кунĕсенче пĕрле Шупашкара спектакль е концерт курма каяççĕ. Ачасене пахалăхсăр ĕçшĕн асăрхаттараççĕ, йăнăша епле тӳрлетмеллине ăнлантараççĕ.

Кашнин – хăйĕн тивĕçĕ. Пĕри кил-çурт тасалăхĕшĕн тăрăшать, тепри выльăх пăхать... Çĕр ĕçне, выльăх апачĕ хатĕрлеме йышпа хутшăнаççĕ. Хĕлле валли салат, компот, сĕткен, варени хатĕрлеççĕ, пахча çимĕç тăварлаççĕ. Килти хуçалăхра, вĕренӳре ачасем пĕр-пĕрне пулăшаççĕ. Тавлашасси, хыттăн калаçасси – вĕсемшĕн ют.

Сывлăха çирĕплетеççĕ. Картишĕнче – тренажер комплексĕ, пӳртре – боксер груши. Спортăн ытти хатĕрĕ те нумай.

Çемье 2012 çулхи раштавра Шупашкар хулинче 18 тăваткал метрлă пӳлĕм туяннă. Ăна тĕпрен юсанă, сĕтел-пукан вырнаçтарнă. Тĕп хулана кайсан кĕрсе канма, апатланма вырăн пур халĕ. Ачисем студент ятне илсен унта пурăнĕç.

Ефимовсем – комбайнерсен йăхĕ. Çăкăр çитĕнтерекенсен пĕрлехи ĕç стажĕ 100 çула яхăн. Николай Александрович ашшĕ Александр Егоров 40 çул ытла "Ленинская искра" хуçалăхра вăй хунă, вăл – ЧР ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Унăн 4 ывăлĕ те мĕн пĕчĕкрен хире тухнă, ашшĕне техника юсама пулăшнă. Çитĕнсен анлă профильлĕ механизатор пулса тăнă.

Çемье тĕрлĕ мероприятие, пултарулăх тупăшăвне хаваспах хутшăнать, 2008 çулта районти литература конкурсĕн "Кĕнекене лайăх илемлетес" номинацийĕнче лауреат ятне тивĕçнĕ. 2010 çулта районти "Çамрăк çемье" конкурсра çĕнтернĕ. Хĕлле "Йĕлтĕр йĕрĕ" ăмăртура куратăн вĕсене. Хурамалăх ялĕн уявĕнче те хастарлăхпа палăраççĕ.

Николай Александрович ача чухнех уйхире кăмăлланăран шкул хыççăн водителе вĕреннĕ. 1993 çултанпа – тăван хуçалăх комбайнерĕ. Хĕлле техника юсать, çуркунне тырă акать, çулла утă çулать, кĕркунне вырмана тухать. Çав вăхăтрах Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче куçăн мар майпа агронома вĕренет. Семинарсене, практикумсене, тренингсене хаваспах хутшăнать. Çĕнĕ техникăна хăвăрт хăнăхать. Унччен "Нива", "Дон" маркăллă комбайнсемпе ĕçленĕ, халĕ – "Полесье" ятлипе.

Николай Ефимов "Професси енĕпе чи лайăххи" ята районти экономика ăмăртăвĕнче пĕрре кăна мар тивĕçнĕ. Хисеп, мухтав хучĕ унăн темиçе те.

Оксана Петровна уншăн – шанчăклă тыл. Мăшăрĕ хирте яра кунах тăрăшнă чухне килти пĕтĕм йывăрлăх ун çине тиенет. Юрать-ха, ачисем çитĕнсе пыраççĕ, амăшне пулăшакан пулчĕç. Унăн шкулта ĕç çителĕклех. Аслă вожатăй, хушма пĕлӳ паракан педагог пулнă, "Капелька", "Акварель" ташă кружокĕсене ертсе пынă. Пултарулăхне пула директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумне çитнĕ. Шкулта вăй хунă хушăрах Оксана Петровна Чăваш патшалăх педагогика университечĕн музыка тата ӳнер пĕлĕвĕн факультетĕнче куçăн мар майпа вĕренет. Пуçаруçă, тĕрлĕ ĕç йĕркелӳçи. Вăл çине тăнипе тата тĕплĕ хатĕрленипе кил-йыш конкурссенче малти вырăнсене йышăнать. Республикăра "Чи ĕçчен çемье" ята çĕнсе илнинче унăн тӳпи пысăк. Чăваш Енри "Ташлакан шкул" проектпа килĕшӳллĕн "Пурте пĕрле ташлатпăр" ăсталăх класне хутшăннă. Районти йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕнче темиçе хутчен пĕрремĕш вырăн йышăннă. Унăн та тĕрлĕ шайри Хисеп хучĕ нумай.

Ачисем ырă сăмаха нумай тивĕçнĕ. Юлия асли пулнă май шăллĕпе йăмăкĕшĕн – ырă тĕслĕх. Юрлама, ташлама ăста, спортпа туслă, уйрăмах баскетболла, волейболла выляма кăмăллать. Юлия амăшĕшĕн килте сылтăм алă вырăнĕнчех пулсан, Ефим – ашшĕшĕн. Техникăпа чакаланма ун пекех кăмăллать. Юлия та, Ефим та шкулти, районти конкурссене хаваспах хутшăнаççĕ, час-часах мала тухаççĕ. Вĕсем çĕнсе илнĕ Хисеп хучĕсемпе дипломсене шутласа та пĕтерес çук.

Софья хальлĕхе пĕчĕк-ха. Ыттисемпе пĕрле Хучаш шкулне вĕренекен пулма хатĕрлекен ушкăна çӳрет. Тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕ халех палăрать. Аппăшĕ пекех илемлĕх тĕнчине туртăнать. Аслисем пăхса тăнипе 2 çултан пуçласа мунча кĕнĕ вăхăтра юр çинче йăваланса е сивĕ шывпа сапăнса сывлăхне çирĕплетет. Çĕр улми, пан улми пуçтарасси, амăшне кукăль хатĕрлеме пулăшасси уншăн киленӳ çеç. Эпĕ пулса курнă кун пурте пĕрле çĕр улми пуссинче ĕçлетчĕç.

Ефимовсем халăх йăли-йĕркине çирĕп пăхăнаççĕ, пур уява та хутшăнаççĕ. Аслашшĕ, асламăшĕ, куккăшĕ, инкĕшĕ, иккĕмĕш сыпăкри çамрăксем... – пысăк йыш пĕрле пуçтарăнать. Çитĕнекен ăру пур енĕпе те аслисене хывнă. Улми йывăççинчен аякка ӳкмест тени ку çемьешĕн те вырăнлă.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

**Кăларăма Валентин ГРИГОРЬЕВ хатĕрленĕ.**

# Юнран юна куçса пырса

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

Аслă ăрурисенчен еплереххисем тата! Ольга Ырсем, Борис Алексеев, Алексей Ургалкин, Анфисса Долгова, Елена Шорникова... Халăх пĕлекеннисем çеç мар, юратаканнисем. Çапла Мускаври вĕренĕве малалла тăснă. Акă камсем унăн чун тыткăчи пулса тăнă. Вĕсем театра сăваплă чиркĕве çӳренĕ пекех çӳренĕ. Театр ĕçĕ – ахаль ĕç çеç мар, пĕтĕм пурнăçĕ – театр. Кунта куллен 12-14 сехет ĕçлесси – хăнăхнă йĕрке. Сехет çине пăхмасăр вăй хурсан çеç артиста, режиссера театр хăй юратма пуçлать. Мĕнре палăрать-ха çакă? Енчен те театр сансăр малалла пурăнаймасть, унта эсĕ çукки çав тери палăрать,



● *Тутимĕр сăнарĕнче.*

куракансем саншăн питĕ тунсăхлаççĕ пулсан. Икĕ енлĕ юрату кирлĕ иккен театра.

Чăваш академи драма театрне ертсе пыма пуçласан В.Н.Яковлев малтанхи никĕске пăрахăçламан, тымарсене татман. Театр мĕнле пур – çапла йышăннă. Малашнехи ĕçре вара хăйĕн йĕрне хывса пынă. Халĕ акă, çулсем иртнĕ майăн, Яковлев театрĕ теме пултаратпăр. Асăннă ӳнерçĕн витĕмĕ çав тери пысăк кунта. Кураканшăн театр çав-çавах «унăн», мĕншĕн тесен малтанхи йăласене, традицисене çирĕп пăхăнса пырать вăл. Яковлев лартнă «Юнлă туй» /Г.Лорка/, «Вун иккĕмĕш каç» /У.Шекспир/, «Лăпкă Дон» /М.Шолохов/, «Хура çăкăр» /Илпек Микулайĕ/, «Айтар» /П.Осипов/, «Çĕрпе хĕр» /Н.Терентьев/, «Чуна кивçен илеймĕн» /В.Распутин/, «Хĕвелсĕр» /М.Горький/, «Сыв пуллашу» /В.Распутин/, «Çатан карта çинчи хура хăмла çырли» /Б.Чиндыков/, «Хӳхĕм хĕрĕн хӳхлевĕ» /Н.Сидоров/, «Моцартпа Сальери», «Дон Жуан /А.Пушкин/, «Арлезианка» /А.Доде/, «Дом Бернарды Альбы» /Г.Лорка/, «Инçет телей çути» /А.Тарасов/, «Ялта» /Ф.Павлов/, «Хурлăхлă хурама сасси» /Поле жизни/ /Д.Гордеев/...

«Çатан карта çинчи хура хăмла çырли», «Сыв пуллашу» спектакльсене уйрăм палăртмасăр иртме çук. Вĕсене пăхнисем икĕ ĕçре те пĕр евĕр паллăсем – чăваш наци фольклорĕн символĕсем пуррине асăрханах. «Тĕнчере мĕн пур, вĕсем пурте чунлă», – тет режиссер. Несĕлĕмĕрсен авалхи тĕнĕ çапла вĕрентнĕ. Эпир çак тĕнчене паян çеç килмен, анчах кашнийĕ паянхи кунпа пурăнать. Ăçтан эпир? Камсем эпир? Мĕнле пурăнатпăр тата мĕншĕн пурăнатпăр? Акă мĕнлерех ыйтусем пирки пирĕн пуçсене ĕçлеттересшĕн Яковлев режиссер. Авалхи тĕнпе пирĕн пурнăç вĕçĕ-хĕррисĕр. Çĕр çинче эпир хăнара çеç, чăн-чăн пурнăç вара – таçта «лере». Акă мĕншĕн тĕне кĕмен чăвашсем вилнĕ çынна пытарнă чухне те ташланă, савăннă, сăра ĕçсе сăйланнă. Эппин, тепĕр тĕнчене каяканăн «лери» пурнăçĕ те çаплах йĕркеллĕ, кăмăллă пултăр тенĕ.

Авалхи тĕн тăрăх кашни япалан чунĕ пур терĕмĕр. Апла этем тĕнчене тытса тăракан пĕртен-пĕр чĕрĕ чун мар, вăл хăй те çут çанталăкăн пĕр пайĕ çеç-мĕн. Ас тăвăр, йĕркеллĕ пурăнăр – çапла асăрхаттарса тăнăн туйăнаççĕ пире Яковлевăн спектаклĕсем.

Мĕншĕн шăпах Яковлев таврăнать-ха мăн асаттесемпе асаннесен тĕнĕ патне? Тупсăмĕ ансат: вăл хăй те çав йăхран. Аслашшĕ Иçти, унăн ашшĕ Ишмук тата унăн ашшĕ Исмук çирĕп тытса пынă авалхи йĕркесене. Амăшĕ Маюк аппа та, Христос тĕнне йышăннă чăваш хĕрарăмĕ те, вĕсене пăхăннă. Кукашшĕ Яхвис, кукамăшĕ Хаккиме. Йăх тымар йывăçне 300-350 çул каялла чакса тĕпчесе тухнă Валерий Николаевич. Вăл пĕтĕмпех тĕне кĕмен чăвашсене çыхăнтарса тăрать. Юнран юна куçса пырса авалхи йăлайĕрке Иçти Валерийĕ /ялта çапла чĕннĕ/ тĕлĕнче шанчăклă хӳтлĕх тупнă. Куçĕ умĕнче иртнĕ уявсене, вăйăсене вăл ĕмĕрлĕхе асра хăварнă.

Сартр çапла калани пур: ӳнерçĕ ачалăхри туйăмсемпе, çавăнпа çеç, чунне пуянлатать. Вăл каярах пĕлӳ илсе ăс-тăнне ӳстерет, опытне пуянлатать, ачалăхри туйăмсем вара яланлăхах юлаççĕ.

Валерий Яковлев пирки те çакнах каламалла. Çакскер хăйĕн анлă тавра курăмĕпе, пысăк пĕлĕвĕпе, пултаруллă ăсталăхĕпе хăйĕн ачалăхри туйăмĕсене, авалхи йăла-йĕркесене пирĕн пата, куракан патне, илсе çитерет. Тивĕçлипех савăнать Валерий Николаевич хăй шăпах Виçпӳрт Шăмăршăра çут тĕнчене килнĕшĕн. «Ашмарин словарьне илетĕп те унăн кашни страницинче тенĕ пекех Виçпӳрт Шăмăршă пирки асăннă, – тет режиссер. – Шел, çамрăк чухне асаттепе асаннерен чылай япалана çырса юлаймарăм». Иçтипе Маюк аппана ăмсанмалли пулнах. Ратнесен хушшинчи кĕреке пуçĕнче тăнă хăй вăхăтĕнче вĕсем. Амăшĕн сăнарĕ уйрăмах асра. Çут çанталăк пани пулнах унăн. Чĕлхи çепĕç, сăнарлă. Ахаль каламалли япаланах илемлĕ калană, çав вăхăтрах çакă литература мар – пурнăç. Вăл хĕр чухне вăйă пуçлаканĕ пулнă. Çакна ăна никам та пухура е ларура çирĕплетмен, хăйĕн асамлăхĕпе, ăнтăлăвĕпе тивĕçнĕ. Авалхи тĕне тĕпчекенсем те, фольклористсем те тĕлĕннĕ унран.

Валерий Яковлев режиссер куçĕпе тĕнчене тишкерер-ха. Мĕн пур савăнăç, çитĕнӳ, кулăну – этемре хăйĕнче кăна. Енчен те пĕр-пĕр тапхăрта /Ренессанс е классицизм, е урăххи/ ыррине вĕрентекенни çиеле тухнă пулсан, çав вăхăтра этем лайăх, йĕркеллĕ пулнă. Пурнăçра мĕне ытларах хакламаллине пĕлнĕ.

Паянхи пăтрашуллă самана пирки мĕн каламалла эппин? Çак арпашăну каллех никамран та мар, хамăртанах килет.

Çак çула çитсе пысăк ĕçсем лартнă, сумлă чыса тивĕçнĕ халăх артисчĕ. Çапах та хăйĕн пирки тиркевлĕн калаçма хăнăхнă Яковлев. Туса çитернĕ ĕçĕсем сахал пек курăнаççĕ имĕш. Искусствăра, илемлĕх ĕçĕнче чарăнса ларни, мĕн пуррипе çырлахни пулмалла мар тет вăл. Хăçан кунран-кун малалла шыратăн, çавăн чухне çеç искусство чĕрĕ. Вăл хăйне яланах вĕренекен шутĕнче туять, мĕншĕн тесен кашни спектакле çĕнĕрен пуçламалла. Халĕччен пĕлни, пултарни тепĕр ĕçре юрăхсăр.

Классика хайлавĕсен шухăшне тарăн уçса панипе пĕрлех Яковлев хальхи вăхăтри наци темипе ĕçлекен режиссер терĕмĕр. Тăван Чăваш Ен тĕнчи унăн спектаклĕсенче ырă, ăшă енĕпе палăрса тăрать. Истори чăнлăхне нихăçан та сутмасть вăл. Халăх кăмăл-сипечĕн паллисене паянхи пурнăç хутлăхĕнче тупать. «Ялта» спектакльте пĕтĕмпех пурнăçри пек. Унта пулса иртекен вăхăта палăртнă – Пĕрремĕш тĕнче вăрçин пуçламăшĕ. Ял вара яланхиллех: утă шăршиллĕ, укăлча хысĕнче анакан хĕвелпе... Яковлевшăн жанр сценисем те пĕлтерĕшлĕ. Акă салтак ачисем килрен киле çӳреççĕ, вăрçа ăсатаççĕ-çке вĕсене. Салтак ачи ташланă май шурă тутăра вĕлкĕштерет. Ял-йышпа, тус-юлташпа яланлăхах уйрăласса сисет-ши?

«Хурлăхлă хурама сасси» /Поле жизни/ спектакльти ĕç-пуç вăрçă хыççăнхи тапхăра сăнлать. Тĕрĕс марлăхпа çынна пусмăрланă вăхăта чуна пырса тивмелле кăтартнă унта.

Мĕн шухăшлаттарать, кулянтарать Яковлев режиссера паян?

Лартман спектакльсем те пур иккен. М.Лермонтов «Маскарачĕ», А.Островский пьесисем илĕртеççĕ. Чăваш классикине илес пулсан «Нарсписĕр» пуçне пурне те кун çути кăтартнă темелле. Яковлев шухăшĕпе – сăнĕ-пичĕпе, хăтланкаларăшĕпе Нарспие çывăх артистка Нина Григорьева çеç пулнă. Пьесăри пĕлтерĕшлĕ тепĕр сăнар – Сетнер. Яковлев идеалĕ – Нарспи – Нина Григорьева тата Сетнер – Алексей Ургалкин. Вĕсене тĕл пултарасшăн режиссер.

Чăн сăлтавĕ акă мĕнре: «Нарспи» вăйлă, илемлĕ поэма. Ун тăрăх хатĕрленĕ пьесăсем халăх пурнăçĕпе, аваллăхĕпе, пуянлăхĕпе çыхăннă. «Айтар» манерлĕ. Эпĕ вара «Нарспие» урăхла куратăп. Шекспир, Гарсиа Лорка шайĕнчи шăпа /рок/ кирлине туятăп, – тет Валерий Николаевич. – Хальлĕхе «Нарспин» поэзи драматургийĕ, çак темăна тĕпе хунă пьеси çук».

Тĕлĕнмелле: Яковлев вăй-халĕн çăл куçĕ ăçтан-ши? Вăл республика шайĕпе irttерекен вун-вун концертпа программăн авторĕ те. Çак тапхăрта 300-400 çынпа ĕçлемелли 120 ытла мероприяти хатĕрленĕ. Тăхăр Акатуй режиссерĕ пулнă.



● *Раççей Патшалăх премине панă самант.*

Чăваш патшалăх культурăпа искусствăсен институтĕнче студи вĕрентсе кăларчĕ. Общество ĕçĕсене асăнса та пĕтерейменĕн. Çак тивĕçсене вăл ăнăçупа ят-сум килессе кĕтсе мар, куракана савăнăç кӳрес, пулас студентсене ăсталăхне парас тесе: «Эпĕ хам та хăй вăхăтĕнче Ольга Ырсем, Елена Шорникова, Алексей Ургалкин, Виктор Родионов артистсенчен хĕлхем илсе юлнă, хамра упранă. Вĕсен те çапла пултăрччĕ», – тет.

Валерий Яковлев Чăваш Республикин К.В.Иванов ячĕллĕ премине икĕ хут тивĕçнĕ: пĕрремĕшне 1977 çулта «Аркатакансем»/-М.Горький/, «Юнлă туй» /Г.Лорка/, «Кай, кай Ивана» /Н.Айзман/ спектакльшĕн, 1999 çулта – «Хӳхĕм хĕрĕн хӳхлевĕ» /Н.Сидоров/ ĕçшĕн, 2004 çулта – «Инçет телей çути» /А.Тарасов/ спектакльшĕн Раççей Федерацийĕн Патшалăх премине. СССР халăх артисчĕ /1991/ çавăн пекех Раççей Федерацийĕн Правительствин Ф.Волков ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ те /2002/, Шупашкар хулин /2004/, Шăмăршă районĕн /2004/ хисеплĕ гражданинĕ, Халăхсен Туслăхĕн орденне /1999/ тата «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» ордена /2010/ тивĕçнĕ.

■ **Надежда СМИРНОВА**

ХАКЛАВ

# Чăваш Ен ятне çӳле çĕклерĕ

***Массăллă информаци хатĕрĕсен, издательствăсен, полиграфи предприятийĕсен, информаци агентствисен историне, аталанăвне, хальхи пурнăçне, ĕç-хĕлне халалланă кĕнеке пирки ЧР Журналистсен союзне вулакансем хăйсен шухăшĕсене пĕлтерме пуçларĕç.***

**И.БОЙКО, Чăваш Республикин наукăн тава тивĕçлĕ деятелĕ, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн аслă ăслăлăх сотрудникĕ, истори наукисен докторĕ, профессор:**

– Кĕнекере журналистсен пурнăçĕпе ĕç-хĕлĕ пирки çырнă статьясем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Халĕччен хаçат-журнал вулакан е телекурав пăхакан, радио итлекен вĕсен хушамачĕсене çеç пĕлнĕ. Энциклопеди вара калем ăстисен биографине, ĕçри тата пултарулăхри çитĕнĕвĕсем çинчен туллин каласа кăтартать. Журналистсен сăн ӳкерчĕкĕсем те пур. Пĕтĕмпе кĕнекере 2400 статья тата 1400 иллюстраци.

Энциклопедие журналистика тытăмне пуçарса янă, калем ăстисене вĕрентнĕ, вĕсен ĕç-хĕлне хăйсен произведенийĕсенче çутатнă ăсчахсемпе, преподавательсемпе, патшалăх деятелĕсемпе, писательсемпе т.ыт. паллаштаракан статьясем те кĕнĕ. Журналистсен конкурсĕсем, премийĕсем, ĕç-хĕлĕн ятарлă тĕсĕсем çинчен хатĕрленĕ материалсем урлă чăваш журналистикин паллă çыннисем, вĕсен çитĕнĕвĕсем пирки туллин пĕлме май пур.

Информаци материалĕсемпе пуян кĕнеке специалистсемшĕн çеç мар, ахаль вулаканшăн та кăсăклă пуласси иккĕлентермест. Чăваш Ен ятне энциклопеди Раççейĕн информаци уçлăхĕнче çӳле çĕклерĕ.

**В.ТУРКАЙ, Чăваш тата Тутар республикисен культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш халăх поэчĕ:**

– Массăллă информаци хатĕрĕсен пысăк çарĕ, предприятисем, организацисемпе коллективсем пĕр ĕмĕр хушши туса кăларнă япаласене пĕрчĕн-пĕрчĕн пухасси пĕрре те çăмăл ĕç мар. Журналистсен союзĕ маттурах çав: çакна пĕтĕмпех пичете хатĕрлесе кун çути кăтартма пултарчĕ. Унта тăван журналистикăн тата халăхăн историйĕпе, аталанăвĕпе, паянхи нумай енлĕ пурнăçĕпе çыхăнни йăлтах пур.

Шел те, чылай чухне журналистăн, МИХсен техника ĕçченĕсен ĕçĕ курăнсах та каймасть, ăна пысăка хурса та хакламаççĕ. Анчах общество, патшалăх, уйрăм çын пурнăçне пресса çутатмасăр куç умне кăларма çук. Çапах та телейĕ пур пичет ĕçченĕсен. Вĕсене халăх хисеплет тата шанать.

Иккĕленместĕп: энциклопеди кун çути курни Чăваш тĕнчине тата нумай нациллĕ Чăваш Ене ăсхакăл тата культура тĕлĕшĕнчен чылай пуянлатрĕ.

**А.СКВОРЦОВ, ЧАССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Раççей Журналистсен тата Писательсен союзĕсен членĕ:**

– "Чăваш журналистикин тата пичечĕн энциклопедине" пăлханса уçатăп. Иртнĕ кунсем куç умне шуса тухаççĕ...

1957 çулхи утă уйăхĕнче СССР Журналистсен союзĕн чăваш уйрăмне уçма йĕркелӳ комитетне туса хучĕç. Председательне "Коммунизм ялавĕ" хаçат редакторне М.Якимова çирĕплетрĕç. Эпĕ яваплă секретарь пултăм. Ĕç питĕ нумай: хаçат-журнал тата радио редакцийĕсен коллективĕсемпе тĕл пулмалла, вĕсене пултарулăх ушкăнне мĕншĕн йĕркеленине ăнлантармалла, чи маттур калем ăстисене явăçтармалла... "Çак ĕçе пурнăçлас тесен хамăрăн та Союз членĕсем пулмалла", – тенĕччĕ Михаил Николаевич. Эпир çавăнтах члена илме ыйтса çыртăмăр. Малтисен шутĕнче член билечĕсене илтĕмĕр.

1959 çулхи пуш уйăхĕнче учредительнăй съезд иртрĕ. Çапла вара СССР Журналистсен союзĕн чăваш уйрăмĕ республикăри чи пултаруллă журналистсене пĕр çĕре пухрĕ.

...Кĕнеке страницисене пĕрин хыççăн теприне уçнă май çак пулăмсем асăма килчĕç. Справочник евĕрлĕрех пулин те энциклопеди ăшă аса илӳсен авăрне çавăрса кĕретех.

■ **Надежда ОСИПОВА**

ЧР Журналистсен союзĕн правленийĕ 1971-1984 çулсенче Чăваш Ен Журналистсен союзĕн правленийĕн председателĕ, 1965-1983 çулсенче Чăваш АССР Патшалăх телерадио председателĕ пулнă, журналистсен С.В.Элкер ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ

**Павел Афиногенович КРЫСИН**

вилнĕ пирки чун-чĕререн хурланнине пĕлтерет.

Республикăри кире пуканĕ йăтакансен федерацийĕн президиумĕ федераци председателĕн, СССР спорт мастерĕн Юрий Михайлович Карповăн амăшĕ, ĕçпе тыл ветеранĕ

**Анна Гурьевна КАРПОВА**

вилнĕ пирки Юрий Михайловичăн çемйипе, çывăх тăванĕсемпе пĕрле чун-чĕререн хурланнине пĕлтерет.

Хаклă юлташăмăрăн – Чăваш Республикинчи кире пуканĕ йăтакансен федерацийĕн председателĕн Юрий Михайлович Карповăн амăшĕ

**Анна Гурьевна КАРПОВА**

вилнĕ пирки Юрий Михайловичăн çемйипе пĕрле хурланатпăр.

**Шупашкарти çывăх тусĕсем.**


РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

В соответствии с постановлением администрации Шемуршинского района от 15.09.2014г. №316 отдел экономики администрации Шемуршинского района сообщает о проведении аукциона 23.10.2014 года в 10.30 ч., который состоится по адресу: с. Шемурша, ул. Советская, д. 8, в здании администрации, каб. 24.

По продаже права на заключение договоров аренды земельных участков из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровыми номерами:

**Лот №2**-21:22:010101:485, площадью 629106 кв.м., для с/х производства, находящийся по адресу: Шемуршинский район, Карабай-Шемуршинское с/пос., начальная стоимость годового размера арендной платы 25200 руб., сроком аренды 10 лет.

**Лот №3**-21:22:010101:486, площадью 485613 кв.м., для с/х производства, находящийся по адресу: Шемуршинский район, Карабай-Шемуршинское с/пос., начальная стоимость годового размера арендной платы 19500 руб., сроком аренды 10 лет.

**Лот №4**-21:22:010101:483, площадью 190714 кв.м., для с/х производства, находящийся по адресу: Шемуршинский район, Карабай-Шемуршинское с/пос., начальная стоимость годового размера арендной платы 7600 руб., сроком аренды 10 лет.

**Лот №5**-21:22:010101:484, площадью 274364 кв.м., для с/х производства, находящийся по адресу: Шемуршинский район, Карабай-Шемуршинское с/пос., начальная стоимость годового размера арендной платы 11000 руб., сроком аренды 10 лет.

Заявки на участие в аукционе принимаются с 24.09.2014 по 18.10.2014 года, с 8 до 17 часов в отделе экономики. Рассмотрение заявок на участие в аукционе состоится 21.10.2014 года в 14.00. Регистрация участников аукциона проводится 23.10.2014 года с 9.45 до 10.00 часов.

Шаг аукциона составляет 5% от начальной цены, размер вносимого задатка 20% от начальной цены. Телефон для справок: 2-32-40. Более подробную информацию можно найти на официальном сайте администрации Шемуршинского района сайте torgi.gov.ru

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельных участков из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет:

- с кадастровым номером 21:08:040101:35 площадью 651331 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Бахтигильдинское с/пос.;

- с кадастровым номером 21:08:040101:36 площадью 58185 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Бахтигильдинское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5, каб 7. Справки по тел.: (83532)6-14-26.

**9 октября зал Чувашской государственной филармонии начало 18-30**
**90-летию со дня рождения выдающегося**
**чувашского композитора А.В.Асламаса посвящается**
ОТКРЫТИЕ 91-ГО КОНЦЕРТНОГО СЕЗОНА
Концерт Чувашского государственного академического ансамбля песни и танца.
Справки по тел.: 62-14-83, 62-54-48.

**ПРОДАЮ**

**7. Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**33.Гравмассу,** песок, щебень, керамзит. Д-ка. Т. 89053465671.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

На основании Земельного кодекса РФ, Постановления Правительства РФ от 11 ноября 2002 г. №808 "Об организации и проведении торгов по продаже находящихся в государственной или муниципальной собственности земельных участков или права на заключение договоров аренды таких земельных участков", постановлений администрации Ибресинского района от 12.09.2014 г. № 612 "Об утверждении перечня земельных участков, расположенных на территории Ибресинского района, выставляемых на торги (аукцион)", администрация Ибресинского района проводит открытый аукцион, который состоится **27.10.2014 года** в **13 часов 30 минут** в зале заседаний администрации района по адресу: Чувашская Республика, Ибресинский район, пгт. Ибреси, ул. Маресьева, дом 49.

Способ продажи - аукцион, открытый по форме подачи предложения по цене.

Организатором торгов выступает отдел экономики и управления имуществом администрации Ибресинского района.

На аукцион выставлены следующие земельные участки:

**Лот №1.** Земельный участок с кадастровым номером 21:10:140201:958 площадью 5000 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика, Ибресинский район, Андреевское сельское поселение.

Вид права: собственность.

Целевое назначение: для ведения сельскохозяйственного производства.

Категория земель: земли сельскохозяйственного назначения.

Обременения отсутствуют.

Начальная цена земельного участка: 52 750 (Пятьдесят две тысячи семьсот пятьдесят) рублей 00 копеек.

Сумма задатка: 10 550 (Десять тысяч пятьсот пятьдесят) рублей 00 копеек.

Задаток установлен в размере 20% от начальной цены земельного участка.

Шаг аукциона: 2 637 (Две тысячи шестьсот тридцать семь) рублей 50 копеек.

**Лот №2.** Земельный участок с кадастровым номером 21:10:100101:1207 площадью 207880 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика, Ибресинский район, Хормалинское сельское поселение.

Вид права: аренда, срок аренды 5 (пять) лет.

Целевое назначение: для сельскохозяйственного производства.

Категория земель: земли сельскохозяйственного назначения.

Обременения отсутствуют.

Начальная цена годового размера арендной платы земельного участка: 10 200 (Десять тысяч двести) рублей 00 копеек.

Сумма задатка: 2 040 (Две тысячи сорок) рублей 00 копеек.

Задаток установлен в размере 20% от начальной цены земельного участка.

Шаг аукциона: 510 (Пятьсот десять) рублей 00 копеек.

**Лот №3.** Земельный участок с кадастровым номером 21:10:140201:951 площадью 89841 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика, Ибресинский район, Ширтанское сельское поселение.

Вид права: аренда, срок аренды 5 (пять) лет.

Целевое назначение: для ведения сельскохозяйственного производства.

Категория земель: земли сельскохозяйственного назначения.

Обременения:

1. Земельный участок частично входит в Зону: "Зона с особыми условиями использования территории (охранная зона объекта производственно-технологического комплекса - воздушной линии электропередачи высокого напряжения ВЛ - 10 кВ "Трудовик" от ПС "Ибреси" 110/10 кВ)", 21.10.2.43, сведения о которой внесены в государственный кадастр недвижимости на основании КАРТА (ПЛАН) xml-файл от 20.06.2013 №21/401/14-1474, Постановление "О порядке установления охранных зон объектов электросетевого хозяйства и особых условий использования земельных участков, расположенных в границах таких зон" от 24.02.2009 № 160. В государственном кадастре недвижимости отсутствуют сведения о частях земельного участка, входящих в Зону: "Зона с особыми условиями использования территории (охранная зона объекта производственно-технологического комплекса - воздушной линии электропередачи высокого напряжения ВЛ - 10 кВ "Трудовик" от ПС "Ибреси" 110/10 кВ)", 21.10.2.43, сведения о которой внесены в государственный кадастр недвижимости на основании КАРТА (ПЛАН) xml-файл от 20.06.2013 №21/401/14-1474, Постановление "О порядке установления охранных зон объектов электросетевого хозяйства и особых условий использования земельных участков, расположенных в границах таких зон" от 24.02.2009 № 160.

2. Земельный участок частично входит в Зону: "Зона с особыми условиями использования территории (охранная зона объекта производственно-технологического комплекса - воздушной линии электропередачи высокого напряжения ВЛ - 10 кВ "Рассвет-Ибреси" от ПС "Ибреси" 110/10 кВ)", 21.10.2.42, сведения о которой внесены в государственный кадастр недвижимости на основании КАРТА (ПЛАН) xml-файл от 08.08.2013 №21/401/14-1473, Постановление "О порядке установления охранных зон объектов электросетевого хозяйства и особых условий использования земельных участков, расположенных в границах таких зон" от 24.02.2009 № 160. В государственном кадастре недвижимости отсутствуют сведения о частях земельного участка, входящих в Зону: "Зона с особыми условиями использования территории (охранная зона объекта производственно-технологического комплекса - воздушной линии электропередачи высокого напряжения ВЛ - 10 кВ "Рассвет-Ибреси" от ПС "Ибреси" 110/10 кВ)", 21.10.2.42, сведения о которой внесены в государственный кадастр недвижимости на основании КАРТА (ПЛАН) xml-файл от 08.08.2013 №21/401/14-1473, Постановление "О порядке установления охранных зон объектов электросетевого хозяйства и особых условий использования земельных участков, расположенных в границах таких зон" от 24.02.2009 № 160.

3. Земельный участок частично входит в Зону: "Зона с особыми условиями использования территории (охранная зона объекта производственно-технологического комплекса - воздушной линии электропередачи высокого напряжения ВЛ - 10 кВ "Ильича" от ПС "Ибреси" 110/10 кВ)", 21.10.2.33, сведения о которой внесены в государственный кадастр недвижимости на основании КАРТА (ПЛАН) xml-файл от 04.04.2014 №21/401/14-1442, Постановление "О порядке установления охранных зон объектов электросетевого хозяйства и особых условий использования земельных участков, расположенных в границах таких зон" от 24.02.2009 № 160. В государственном кадастре недвижимости отсутствуют сведения о частях земельного участка, входящих в Зону: "Зона с особыми условиями использования территории (охранная зона объекта производственно-технологического комплекса - воздушной линии электропередачи высокого напряжения ВЛ - 10 кВ "Ильича" от ПС "Ибреси" 110/10 кВ)", 21.10.2.33, сведения о которой внесены в государственный кадастр недвижимости на основании КАРТА (ПЛАН) xml-файл от 04.04.2014 №21/401/14-1442, Постановление "О порядке установления охранных зон объектов электросетевого хозяйства и особых условий использования земельных участков, расположенных в границах таких зон" от 24.02.2009 № 160.

4. Земельный участок частично входит в Зону: "Зона с особыми условиями использования территории (охранная зона объекта производственно-технологического комплекса - воздушной линии электропередачи высокого напряжения ВЛ - 10 кВ "Кирова" от ПС "Ибреси" 110/10 кВ)", 21.10.2.45, сведения о которой внесены в государственный кадастр недвижимости на основании КАРТА (ПЛАН) xml-файл от 29.05.2013 №21/401/14-1492, Постановление "О порядке установления охранных зон объектов электросетевого хозяйства и особых условий использования земельных участков, расположенных в границах таких зон" от 24.02.2009 № 160. В государственном кадастре недвижимости отсутствуют сведения о частях земельного участка, входящих в Зону: "Зона с особыми условиями использования территории (охранная зона объекта производственно-технологического комплекса - воздушной линии электропередачи высокого напряжения ВЛ - 10 кВ "Кирова" от ПС "Ибреси" 110/10 кВ)", 21.10.2.45, сведения о которой внесены в государственный кадастр недвижимости на основании КАРТА (ПЛАН) xml-файл от 29.05.2013 №21/401/14-1492, Постановление "О порядке установления охранных зон объектов электросетевого хозяйства и особых условий использования земельных участков, расположенных в границах таких зон" от 24.02.2009 № 160.

5. Земельный участок частично входит в Зону: "воздушная линия электропередачи ВЛ - 110 кВ "Канаш-Буинск"", 21.00.2.15, сведения о которой внесены в государственный кадастр недвижимости на основании Свидетельства о государственной регистрации права от 08.05.2008 № 404308, Письмо-обращение от 12.07.2013 № 21/401/13-5336, Доверенность от 05.07.2013 № 3Д-1328. В государственном кадастре недвижимости отсутствуют сведения о частях земельного участка, входящих в Зону: "воздушная линия электропередачи ВЛ - 110 кВ "Канаш-Буинск"", 21.00.2.15, сведения о которой внесены в государственный кадастр недвижимости на основании Свидетельства о государственной регистрации права от 08.05.2008 № 404308, Письмо-обращение от 12.07.2013 № 21/401/13-5336, Доверенность от 05.07.2013 № 3Д-1328.

Начальная цена годового размера арендной платы земельного участка: 12 200 (Двенадцать тысяч двести) рублей 00 копеек.

Сумма задатка: 2 440 (Две тысячи четыреста сорок) рублей 00 копеек.

Задаток установлен в размере 20% от начальной цены земельного участка.

Шаг аукциона: 610 (Шестьсот десять) рублей 00 копеек.

Для участия в аукционе претенденты должны представить в срок **по 21.10.2014** года следующие документы по описи:

- заявку на участие в аукционе, по установленной форме с указанием реквизитов счета для возврата задатка;

- квитанцию об уплате задатка - для физических лиц или платежный документ (с отметкой банка плательщика об исполнении) - для юридических лиц (оригинал);

- копию документа удостоверяющего личность (паспорт) - для физических лиц;

В случае, если от имени заявителя действует его представитель по доверенности, к заявке должна быть приложена доверенность на осуществление действий от имени заявителя, оформленная в установленном порядке, или нотариально заверенная копия такой доверенности. В случае, если доверенность на осуществление действий от имени заявителя подписана лицом, уполномоченным руководителем юридического лица, заявка должна содержать также документ, подтверждающий полномочия этого лица.

Юридические лица дополнительно прилагают к заявке: - нотариально заверенные копии учредительных документов и свидетельства о государственной регистрации юридического лица;

- копию документа, подтверждающего полномочия лица на осуществление действий от имени заявителя - юридического лица (копию решения о назначении или избрании, либо приказа о назначении физического лица на должность, в соответствии с которым такое физическое лицо обладает правом действовать от имени заявителя без доверенности, или выписку из такого документа (копия должна быть заверена организацией);

- копию решения об одобрении или о совершении крупной сделки в случае, если требование о необходимости наличия такого решения для совершения крупной сделки установлено законодательством РФ, учредительными документами заявителя и если для заявителя заключение договора купли-продажи/аренды или внесение задатка являются крупной сделкой, или выписки такого решения (копия должна быть заверена организацией).

Документы, содержащие неоговоренные помарки, подчистки, исправления и т.п. аукционной комиссией не рассматриваются. Одно лицо имеет право подать только одну заявку. Заявка, поступившая по истечении срока ее приема, подлежит возврату претенденту.

Организатор торгов имеет право отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за 15 (пятнадцать) дней до даты его проведения, а также принять решение о внесении изменений в извещение и (или) документацию об аукционе не позднее, чем за 5 (пять) дней до даты окончания подачи заявок.

Дата начала приема заявок с **24.09.2014** года. Прием заявок на участие в аукционе осуществляется в рабочие дни с 8 часов 00 минут до 17 часов 00 минут по адресу: Чувашская Республика, Ибресинский район, пгт. Ибреси, ул. Маресьева, дом 49 (каб. 304), телефоны для справок: 8(83538) 2-25-71, 2-12-18.

Определение участников торгов состоится **22.10.2014** года в администрации Ибресинского района (каб. 304) в 14 часов 30 минут.

Исполнение обязанности по внесению суммы задатка третьими лицами не допускается.

Задаток перечисляется на счет: УФК по Чувашской Республике (администрация Ибресинского района Чувашской Республики), ГРКЦ г. Чебоксары НБ Чувашской Республики № счета получателя платежа 40302810697063000106, КПП 210501001, ОКТМО 97613000, ИНН 2105002182, БИК 049706001, лицевой счет 05153000990. Возврат задатка участникам, не выигравшим аукцион или не допущенным к участию в аукционе, осуществляется в течение 3 (трех) банковских дней со дня подписания протокола о признании претендентов участниками аукциона или протокола об итогах аукциона. Задаток, внесенный победителем, засчитывается в оплату стоимости приобретаемого в собственность/аренду земельного участка.

Победителем аукциона признается участник, предложивший наиболее высокую цену за соответствующий земельный участок. Договор подлежит заключению в срок не позднее 5 (пяти) дней со дня подписания протокола об итогах аукциона. Если победитель аукциона отказался или уклонился от подписания протокола об итогах аукциона, подписания договора купли-продажи или аренды, внесенный победителем аукциона задаток ему не возвращается, а организатор торгов принимает решение об отказе в заключение договора купли-продажи или аренды с указанным лицом.

Настоящее извещение и аукционная документация размещены на официальном сайте Ибресинского района в сети "Интернет" (http:www.ibresi.cap.ru).

Прием заявок, оформление документов для участия на торгах, ознакомление с формой заявки, проектом договора купли-продажи или аренды земельного участка, осмотр земельных участков на местности (с предварительным согласованием с претендентами) осуществляются в рабочие дни с **24.09.2014** года по **21.10.2014** года в отделе экономики и управления имуществом администрации Ибресинского района Чувашской Республики по адресу: Чувашская Республика, Ибресинский район, пгт. Ибреси, ул. Маресьева, д.49, каб.304.



**чăваш халăх хаçачĕ ХЫПАР**

**Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ**

Федерацин сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

**Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ**

**Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ**

**РЕДКОЛЛЕГИ:**

**М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/**
**Г.А.МАКСИМОВ /директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан/**
**С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/**
**Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/**
**Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/**

**Дежурнăй редактор В.Н.БАГАДЕРОВА**

**Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев просекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".**

ТЕЛЕФОНСЕМ

**Редакци телефонĕсем:**
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
**пайсем:**
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
**бухгалтери –** 28-83-64
**коммерци дирекцийĕ:**
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
**корр. пунктĕсем:**
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

hypar2008@rambler.ru

**Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.**

**Факс:** /8352/ 28-83-70
**Электрон почта:**
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

**Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче кăларанă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.**

**РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.**

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Номере 23.09.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7393. Заказ 3594.